Чебоксарская Б. Б. им. Горького

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

1938 ЙАНВАР 30 ВЫРСАРНИКУН
24 (4837)-мӗш №

ЧӐВАШ КОММУНӖ

20-мӗш ҫул тухать ● ПСК(б)П Чӑваш Обкомӗпе Тӗпӗҫтӑвкомӗн хаҫачӗ ● Пӗр №-рӗ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСӖ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати
ТЕЛЕФОНСЕМ: Редакторӑн 0—67
Ред. заместителӗн 0—88
Редакци секретарӗн 4—40
Дежурнайӑн 6—23

Пӗтӗм Российӑн XVI-мӗш созыври Тӗпӗҫтӑвкомӗн IV-мӗш Ҫессине пухас срукпа кунйӗрки ҫинчен

Пӗтӗм Российӑ Тӗпӗҫтӑвкомӗн Президиумӗ йышӑннӑ

ПОСТАНОВЛЕНИ

Пӗтӗм Российӑ Тӗпӗҫтӑвкомӗн Президиумӗ ҫапла йышӑнать:

1. Пӗтӗм Российӑн XVI-мӗш созыври Тӗпӗҫтӑвкомӗн IV-мӗш Ҫессине 1938 ҫулхи февралӗн 14-мӗшӗнче Мускав хулинче пухас.

2. Ҫессин кун йӗркине ҫакӑн пек ҫирӗплетес: „РСФСР Аслӑ Советне суйламали Положени" пройекчӗ. Доклад тӑваканӗ Н. А. БУЛГАНИН йулташ.

Пӗтӗм Российӑ Тӗпӗҫтӑвкомӗн председателӗ М. КАЛИНИН.

Пӗтӗм Российӑ Тӗпӗҫтӑвком секретарӗшӗн— Пӗтӗм Российӑ Тӗпӗҫтӑвком Президиумӗн членӗ А. АРТЮХИНА.

Мускав, Кремль, 1938 ҫулхи йанварӗн 28-мӗшӗ.

ПАРТИРЕ ТӐМАННИСЕНЕ ХӐЙУЛӐНРАХ ЙЕРТСЕ ПЫРАС ӖҪЕ ЛАРТМАЛА

Районсенче, облӑҫсенче, союзлӑ тата республикӑлла халӑх комиссариачӗсене йертсе пырас ӗҫе йуланкин ҫулта ҫеҫ 100.000 ҫынна ӗҫе лартнӑ. Ҫӗр пин ҫын ытла! Пӗр ҫак цыфӑр ҫеҫ пирӗн ҫӗршыври пысӑк ҫӗкленӳ пулнине сталинла пысӑк ҫӗнтерӳсем тунине кӑтартать.

Партире тӑраканнисемпе партире тӑманнисене, халӑх хушшинчи малта пыракан ҫынсене, йертсе пырас ӗҫе пӗрмай куҫарса пырасси партин ленинла-сталинла политикин тӗп принципӗсенчен пӗри пулать. Халӑх хушшинче организаторла талантсем питӗ нумай,—тесе ҫырнӑ Ленин 1918 ҫулта. Совет влаҫӗ пулнӑранпа 20 ҫул иртнӗ вӑхӑтра социализм ҫӗнтӗрнисем рабочисем хушшинче те, хресченсем хушшинче те, интеллигенци хушшинче те талантсен, организаторсен ҫӗнӗ, питӗ те пысӑк вӑйӗсен ҫӑлкуҫӗсене уҫрӗҫ.

Троцкисла-бухаринла сӑтӑрҫӑсем ҫӗнӗ кадрсене ӗҫе лартассине йурийех чӑрмантарса пынӑ. Вӗсем пирӗн халӑх хушшинче пӗрмай ӳссе пыракан талантсене пӑчӑхтарса пынӑ, вӗсем хӑйсен сӑтӑрҫӑла, шпионла агенчӗсене, вӗсене улӑштарма май ҫук, „патентланӑ" руководителсен суйа чыс-хисепне парса, лартса тухнӑ. Сталинла Тӗп Комитет йертсе пынипе парти пирӗн аппаратран тӑшманла бандӑсене кӑларса ыватас тӗлӗшпе пысӑк ӗҫсем туса иртерчӗ, ку вӑл Ленин—Сталин ӗҫӗшӗн, халӑх ӗҫӗшӗн чӗререн тӑрӑшса ӗҫлекен, талантлӑ, тӳрӗ ӗҫлекен ҫӗнӗ ҫынсене вуншер пинӗн ӗҫе лартма ҫул тасатса пачӗ.

Ҫӗнӗ кадрсене пысӑкрах ӗҫе лартасси массӑлӑ ӗҫ пулса тӑчӗ, вӑл пур вырӑнсенче те пекех массӑлӑ ӗҫ пулса тӑрать. Рйадовойсемпе „ватам" коммуниссене йертсе пырас ӗҫе лартассине парторганизацисем нумайӗшӗсем ӑнланса илнӗ, ӑна пурнӑҫа кӗртессӗ пулсан, **партире тӑман** работниксене йертсе пырас ӗҫе лартассине вара вырӑнсенче халӗхе аран-аран, иккӗленсе, пачах ҫителӗксӗр туса пыраҫҫӗ. Ҫав вӑхӑтрах партире тӑманнисене йертсе пырас ӗҫе лартмали майсем питӗ пысӑк. Ҫакна ССР Сойузӗн Аслӑ Советне суйлас тӗлӗшпе иртернӗ кампани лайӑх кӑтартса пачӗ. Суйлавра коммуниссемпе партире тӑманнисен сталинла блокӗ паха ҫӗнтерӳ турӗ. Ҫак ҫӗнтерӳве хатӗрлессинче суйлав кампанине ирттерессинче парти организацийӗсем йертсе пынипе ӗҫленӗ партире тӑман агитаторсем, организаторсем, пропагандиссем пӗчӗк мар вырӑн йышӑнса тӑнӑ. Халӗ ӗнтӗ вӗсене совет, хуҫалӑх, общиствӑлӑ ӗҫе йертсе пыма хӑйуллӑн лартасси мӗнпур парторганизацисен задачи пулать.

Партире тӑманнисене ҫавӑн пек пысӑкрах ӗҫе лартма паха пример кӑтартни— Лысенко тата Асланова йулташсене ССР Сойузӗн Аслӑ Совечӗн палатисен председателӗсен заместителӗсене суйлани пулать. Трофим Лысенко, партире тӑман ученый, хӑй тӗллӗн вӗреннӗскер, халӑхӑн шанчӑклӑ ывӑлӗ, ӑна Сойуз Совет председателӗн заместителне суйланӑ. Чимназ Асланова, партире тӑман учительница, халӑхӑн шанчӑклӑ хӗрӗ, ӑна Национальнӑҫсен Совет председателӗн заместителне суйланӑ. Партире тӑманнисене пысӑкрах ӗҫе хӑйулӑн лартассин питӗ паха образецӗ!

Суйлав кампанийӗ вырӑнсенче, уйрӑмах районти организацисенче партире тӑманнисене пысӑкрах ӗҫе лартассине кӑштах вырӑнтан тапратрӗ. Тӗслӗхрен, Горький облӑҫӗнчи Лысков районӗнче партире тӑман колхознике Кузьмин йулташа районти ҫӗрӗҫ пайӗн заведуйушчине лартнӑ. Ҫак облӑҫрах партире тӑман учителе Рыбин йулташа районти сутӗҫ пайӗн заведуйушчине лартнӑ. Краматорск хула совечӗн жалобӑ бӳро пуҫлӑхӗнче халӗ Шарабак йулташ ӗҫлет, вӑл килте ӗҫленӗ хӗрарӑм, участкӑри суйлав комиҫҫи председателӗ пулнӑскер. Хоперск районӗнче рйадовой, партире тӑман колхозницӑна Балалайева йулташа социальнӑй пулӑшу пайӗн заведуйушчине лартнӑ.

Мускавпа Ленинград хулинчи тата районсенчи организацисем ку тӗлӗшпе хӑшпӗр утӑмсене тунӑ. Мускавра партире тӑман темиҫе йулташа строительствӑ начальникӗсем пулма уйӑрса лартнӑ, партире тӑман инженер Шестаков—„Мосводстрой" трест директорӗ. Ленинградра „Красный химик" заводран партире тӑман специалиса—Степанов йулташа Кировск районӗнчи совет председателӗн заместительне уйӑрса лартнӑ. Партире тӑман Катышева Ленинград хулинчи социаллӑ обеспечени пайӗн пуҫлӑхӗ пулса ӗҫлет.

Партире тӑманнисене пысӑкрах ӗҫе лартассине тапратса панӑ. Анчах ку ӗҫӗн сарӑмлӑхӗ, ҫак ӗҫе тӑвас тӗлӗшпе парти хушшисемпе тата вырӑнти организацисем тума пултарнисемпе танлаштарсан, ытла та пит пӗчӗккӗ. **Коммуниссене те, партире тӑманнисене те** пысӑкрах ӗҫе лартма мӗн чарса тӑрать-ха? Ҫамрӑксене, совет ҫӗршывӗнчи калама ҫук ырӑ ҫамрӑк ӑруа—хӗрӳлӗ патриотсене, социализмла ӗҫӗн хавхаланулӑ паттӑрӗсене, талантлӑ комсомолецсене — рабочи —стахановецсене, инженерсене, агрономсене, учительсене пысӑкрах ӗҫе лартма пуринчен ытларах мӗн чӑрмантарать-ха? Ҫавна тума, чи малтан, чылай облӑҫсемпе районсенчи руководителсем политикӑ тӗлӗшпе инҫене курманни, хӑйсем тавра ӳссе пыракан тата ӳссе ҫитӗннӗ ҫӗнӗ ҫынсене курма пӗлменни чӑрмантарать. Час-часах тата районсемпе облӑҫсенчи учрежденисен „патентлӑ" руководителӗсен хӑнӑхса ҫитнӗ ушкӑнӗшӗн тӑни—чирӗнтӗ вӑл—чӑрмантарать. Хӑшпӗр руководителсем халӑхӑн вӑйне шанманни чӑрмантарать.

Партире тӑманнисене пысӑкрах ӗҫе лартассине хӑшпӗр коммуниссем мӑнкӑмӑлланса пуҫа каҫӑртни хальте ҫапла пурри те чӑрмантарать,—хӑшпӗр коммуниссем ҫавӑн пек мӑнкӑмӑлланса пуҫа каҫӑртнине Ленин ывӑнма пӗлмесӗр питлесе пынӑ. Сталин та питлесе пырать. Партире тӑманнисене государствӑ ӗҫӗн сывӑхне йама хӑракан коммуниссем те, ҫавӑн пек хӑрама нимӗнле сӑлтавсем те ҫук пулин те, сахал мар-ха. Социализмӑн ҫӗнтерӗвӗ,—ӑна Ленин—Сталин партийӗ йертсе пынипе тунӑ,—совет халӑхӗн халиччен курман пӗтӗҫӳне, моральлӗ-политикӑлӑ пӗрлӗхне пачӗ. Пирӗн ҫӗршывра икӗ аслӑ вӑй халӑхпа коммунизм —пӗр пӗр-пӗрине ҫывӑх пулса тӑчӗҫ, пӗр ҫӗре пӗрлешрӗҫ. Сталинла политикӑ пӗтӗм совет халӑхӗн политики пулса тӑрать, халӑхӑн тӳрӗ кӑмӑллӑ ывӑлӗсемпе хӗрӗсем пурте большевиксен партийӗ йертсе пынипе ҫак политикӑна анчах пурнӑҫа кӗртсе пыраҫҫӗ, малашне те ӑна пурнӑҫа кӗртсе пырӗҫ.

Партире тӑманнисене—парти членӗсене пекех—йертсе пырас ӗҫе лартассине таткӑлӑн та хӑйулӑн туса пымала. Ахаль ӗҫри работнике тӳрех, темиҫе пусӑм урлӑ, пысӑк ӗҫе уйӑрса лартни бӳрократа ҫеҫ кӳренетерме пултарать. Пур ҫынсене те пӗр пекех йунашар пусӑма ҫеҫ куҫарса пымала тесе бӳрократ ҫеҫ ыйтма пултарать. Пысӑкрах ӗҫе лартакан ҫынсем хӑйсене палӑртсан мӗн тума пултарнине курма пӗлмеле, вӗсене ӗҫре хӑварг ӳсме пулӑшмала. Йертсе пырас ӗҫе лартнӑ кадрсене пулӑшса пымала, вӗсене чӑрмантарнине ҫӗмӗрмеле. Ҫавӑн пек чӑрмантарни пур-ха вӑл, мӗншӗн тесен пирӗн организацисенче троцкисла - бухаринла сӑтӑрҫӑсене тӗппех лӗтерсе ҫитермен-ха, вӗсем ӗҫе ҫӗнӗ ҫынсем, Сталинла Тӗп Комитетпа совет правительствишӗн пӗтӗм чӗререн тӑракан ҫынсем, хутшӑнассинчен вутран та ытла хӑраҫҫӗ.

Пӗтӗм халӑхӑн творчествӑлӑ ҫӗкленӳвӗ, унӑн вӑй-хӑвачӗ хушӑнни, пурнӑҫри хавасланхпа хастарлӑхӗ, шанчӑклӑхӗ калама ҫук пысӑк. Малашне—ҫӗршывӑн оборонӑ пултарулӑхне ҫирӗплетме халӑх массисен пурнӑҫне тата лайӑхлатса, культурине хӑпартса пыма вӗресе тӑнӑ пек ӗҫлемеле. Ҫавӑн пек вӗресе тӑракан ӗҫе туса пыма—районсенче, облӑҫсенче, республикӑсенче, халӑх комиссариачӗсенче, общиствӑлӑ организацисенче—организаторсен ҫӗнӗ кадрӗсем ытларах та ытларах кирлӗ. Харпӑрхӑй патӗнчех— районра, облӑҫра, республикӑра—ҫав ҫӗнӗ кадрсене **партири тата партире тӑман** рабочисем, хресченсем, интеллигенци хушшинчен тупса ӗҫе уйӑрса лартмала, вӗсене Ленинла-Сталинла хӑватпа пӑхса ҫитӗнтермеле, — ҫакӑ вӑл партин кашни организацийӗн, кашни большевик-руководителӗн таса тивӗҫӗ пулса тӑрать.

(„Правда").

Рабочисемпе хресченсен Хӗрлӗ Ҫарӗ тата Тинӗс Ҫар Флочӗ ҫирӗм ҫул тултарнӑ тӗле.

УКЕРЧӖК ҪИНЧЕ: К. Йе. Ворошилов йулташ 1918 ҫулта, Х-мӗш арми командирӗ пулнӑ вӑхӑтра, Царицынра. (Сталинградри И. В. Сталин музейӗ).

С. Курунин репродукцийӗ (Сойузфото).

Чӑваш республикне 1938 ҫулхи йалхуҫалӑх ӗҫӗсем йенӗпе панӑ государствӑ планӗ

ССР Союзӗн Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ „1938 ҫулхи йалхуҫалӑх ӗҫӗсен государствӑ плане ҫинчен" йышӑннӑ постановлени тӑрӑх, Чӑваш республикне 1938 ҫула йалхуҫалӑхри тӗп ӗҫсем йенӗпе ҫакӑн пек план ҫирӗплетсе панӑ (пиншер гектар):

Ҫураки лаптӑкӗ (иртнӗ ҫулта акнӑ куракӑсене шута кӗртмесӗр) совхозсенче—3,2, колхозсенче—346 тата йединоличниксене—43.

Таса ҫӗртме сухи тумала: совхозсенче—0,7, колхозсенче—142. Кӗрхи тырӑ акмала: совхозсенче—0,7, колхозсенче—201, йединоличниксен—17. Керсухи тумали план: совхозсенче—3, колхозсенче—280.

Колхозсенче ҫурхи тӗштырӑсем акма ҫакӑн пек план панӑ (пиншер гектар): тӗштырӑсем пурӗ—260,6, вӑл шутран тула—59, урпа—8, сӗлӗ—131, вир—4,5, хуратулӑ—3,5, пӑрҫалӑ тыр ӑсем—41.

Техникӑла культурӑсем йенӗпе колхозсем тӑрӑх ҫапла план панӑ (пиншер гектар): пӗтӗмпе 10, вӑл шутран долгунец йӗтӗн—3, кантӑр—5, махоркӑ—2.

Пахча-ҫимӗҫ тата выльӑх апачӗ вальли акакан культурӑсем йенӗпе колхозсем тӑрӑх ҫапла панӑ: пахча-ҫимӗҫсем пурӗ—26,6 пин гектар, вӑл шутран ҫӗрулми—24,6 пин, вӑл шутран спирт завочӗсем тавра—3,5 пин; выльӑх апачӗсем вальли акакан культурӑсем (иртнӗ ҫулта акнӑ куракӑсемсӗр) пурӗ—48,8 пин, вӑл шутран: пӗр ҫул хушши ӳсекен куракӑсем—42,5 пин гектар, нумай ҫул хушши ӳсекенсене—0,5 пин, тымарҫимӗҫсем—2,8 пин гектар. Кӗсемсӗр пуҫне иртнӗ ҫулта акнӑ куракӑсен ҫулмали лаптӑк—77 пин гектар, тырӑ ҫине акмали куракӑсен лаптӑкӗ—57 пин гектар, вӑл шутран: клевер—55 пин, люцернӑ—2 пин гектар.

Нумай ҫул ӳсекен тата пӗр ҫул ӳсекен куракӑсен вӑрлӑхне тума 1938 ҫулта ҫакӑн чухлӗ лаптӑк хӑварма палӑртнӑ: Апат-ҫимӗҫ промышленнӑҫӑн Халӑх комиссариачӗн совхозӗсенче нумай ҫул ӳсекен курӑк йенӗпе—100 гектар, пӗтӗмпех клевер. Колхозсенче—13,2 пин гектар, вӑл шутран: клевер—12 пин, люцернӑ—600 гектар.

Клевер тата люцернӑ вӑрлӑхӗ, ҫавӑн пекех тата улӑх куракӗсен вӑрлӑхӗ тумали вырӑнсене 1938 ҫулта колхозсем тӑрӑх ҫитес ҫулсем вальли ҫапла хӑварма палӑртнӑ: клевер—3 пин, улӑх куракӗсем йенӗпе—500 гектар.

Украинӑри К(б)П Тӗп Комитечӗн Пленумӗ

КИЙЕВ, 28—I. (ТАСС). Ӗнер Украинӑри Коммуниссен (большевиксен) Партин Тӗп Комитечӗн Пленумӗ пулса иртнӗ.

Пленум С. В. Косиор йулташа, вӑл урӑх ӗҫе куҫнӑ май, Украинӑри К(б)П Тӗп Комитечӗн пӗрремӗш секретарӗн тата Политбӳро членӗн ӗҫӗсенчен хӑтарнӑ.

Пленум УК (б)П Тӗп Комитечӗн пӗрремӗш секретарӗн ӗҫӗсене туса пыма Н. С. Хрущев йулташа суйланӑ.

УК(б)П Тӗп Комитечӗн иккӗмӗш секретарӗн ӗҫӗсене туса пыма М. А. Бурмистенко йулташа суйланӑ.

Германири концентрацилӗ лагерсем

ВЕНА, йанварӗн 26 мӗш. (ТАСС). „Бернер Тагвахт" хаҫат Германири Папенбург хули ҫывӑхӗнчи Естервеген концлагерӗнчен ларса тухнӑ Артур Винклерӑн чылай статййисене пичетлесе кӑларать. Автор Германи фашисӑмӗн тискерлӗхне тӳсекен ҫынсене хӑрушшӑн асаплантарни ҫинчен тӗплен ҫырса кӑтартать. Остфрисландра ҫирӗм тӗрлӗрен концентрацилӗ лагер пур, вӗсенче кашниннинчех пин ҫын ытла лараҫҫӗ. Естервегенри лагерта Артур Винклер ларнӑ вӑхӑтра 1 500 ҫынна йахан пулнӑ, вӗсем хушшинче ҫурри ытла рабочи коммуниссем тата социал-демократсем.

Лагерсене „СС" текен охранӑ отрйачӗсем сӑнаса пӑхса тӑраҫҫӗ, вӗсем патне лагӗрте пурӑнакансемпе хайаррӑн пулма хушса йатарласа инструкцисем йарса тӑраҫҫӗ. „СС" офицерӗсемпе охранникӗсем лагӗре хупнисене мораль тата ӳт-пӳ йенчен калама ҫук хытӑ асаплантараҫҫӗ. Вӗсем йаланах: ларакансен нимӗнле права та ҫук, вӗсем пӗтӗмӗшпех охранӑ аллинче, тесе калаҫҫӗ; офицерсем ларакансен арӑмӗсене, ачисене тата тӑванӗсене репресси тӑвассипе хӑратаҫҫӗ. Ларакансемпе хӑйсемпе вӗсем питӗ тискеррӗн хӑтланаҫҫӗ: час-часах ӑнран тухиччен хӗнеҫҫӗ.

Германи фашисӑмӗн палачӗсем „спортлӑ упражненисем" тутаратпӑр, тесе вӑй ҫитмен ӗҫсене ӗҫлеттерсе лагӗрте ларакансен шухӑшкӑмӑлне хуҫма тата вӗсен сывлӑхне тӗппех арката тӑрӑшаҫҫӗ.

Испани компартийӗн Политбӳро ларӑвӗ

БАРСЕЛОНА, йанварӗн 28-мӗш. (ТАСС). Испани компартийӗн Политбӳровӗ хӑйӗн йанварӗн 15—16-мӗшӗсенче пулса иртнӗ ларӑвӗсенче ҫак ыйтусене сӳтсе-йавнӑ: 1) Парти организацисен ларӑ-тӑрӑвӗ, 2) Пӗтӗмӗшлӗ рабочи союзӑн пӗрлӗхне тӗреклетес тӗлӗшпе коммуниссем ӗҫлесси тата Пӗтӗмӗшлӗ рабочи союзпа Ӗҫӗн нацилӗ конфедераци пӗрлӗхӗ пулса ӗҫлесси тата 3) халӑх ҫарне ҫирӗплетес тӗлӗшпе парти ӗҫлесси.

Кун йӗркинчи пӗррӗмӗш пунктипе парти членӗсен хисепӗ ӳснине палӑртнӑ, ҫак майпа коммунисла парти хӑйӗн хисепӗпе республикӑлла Испанире чи хӑватлӑ организаци пулса тӑрать.

Пӗтӗмӗшлӗ рабочи союз организацийӗсенче тепӗр хут пӗрлӗх тунине саламласа, Политбӳро Пӗтӗмӗшлӗ рабочи союзра йертсе пыракан ӗҫсенче ӗҫлекен коммуниссем пӗрлӗхшӗн ҫине тӑрса кӗрешнине кӑмӑлласа палӑ тунӑ.

Пӗтӗмӗшлӗ рабочи союза пайласа йама хӑтланнине пӗтернӗ хыҫҫӑн рабочи класӑн економикӑлӑ организацийӗсем ҫар проблемисене, уйрӑмӑн илсен, ҫӗршывӑн економикӑлӑ пурнӑҫӗнчи проблемӑсене татса парас тӗлӗшпе татах та пысӑк вырӑн йышӑнма пур майсем те пур.

Республикӑ правительстви йертсе пынипе тата, Пӗтӗмӗшлӗ рабочи союз, Ӗҫӗн нацилӗ конфедерацийӗ тата тӑванлӑ организацисем пӗр-пӗрипе таччӑн туслашнипе,—вӗсем пӗр-пӗрипе ҫывхарассипе тата пӗрлӗхлӗ пулса ӗҫлессипе хальтерех пурнӑҫа кӗртмелӗ,—ҫав проблемӑсене вӗрейсе татса пама кирлӗ, тесе шутлать компарти.

Уйрӑмӑн илсен, Пӗтӗмӗшлӗ рабочи союзпа Ӗҫӗн нацилӗ конфедерацин пӗрле ӗҫлемели программӑ тумала, тата ҫар промышленнӑҫӗнче ку таринччен пулнӑ йӗркесӗрлӗхсене сирсе пӑрахма тата рабочи класа ҫимӗҫ тӑратас ӗҫпе вӗсен пурнӑҫне йусама правительствӑпа пӗрле ӗҫлемеле.

Политбӳро мӗн пур ҫар промышленнӑҫ управленине пӗр алла илсен ҫеҫ ӑна организацилес тата хӑватлӑрах ӳстерес проблемӑна таткӑлӑн татса парассине ӗненсе тӑрать.

Ҫав вӑхӑтрах Политбӳро пӗтӗм промышленнӑҫри тата чи малтан ҫар промышленнӑҫӗнчи рабочисене ҫимӗҫсемпе кирлӗ йапаласем тӑратассине вӑйлатас тӗлӗшпе пуҫарулӑ ӗҫ тунине саламлать тата мӗн пур парти организацисемпе парти членӗсене вӑл пуҫарӑва хута кӗрсе пулӑшма тата ӑна сарса йама чӗнет.

Политбӳро коммуниссене ҫав задачӑсене пурнӑҫа кӗртнӗ ҫӗрте тата пӗтӗм профсойуз ӗҫӗнче рабочи социалиссемпе тата анархиссемпе таччӑн пӗрлешсе ӗҫлеме чӗнет; ҫапла туни вӑл Испанири мӗн пур профсойуз йухӑмне пӗрлештерес ыйтӑва лартма условисем туса парать.

Нойабӗрти пленум халӑх ҫарне ҫирӗплетес тӗлӗшпе лартнӑ задачӑсенчен хӑшпӗрисене коммуниссем айлӑн пурнӑҫа кӗртнӗ, ҫак вӑл фронтсене ҫирӗплетрӗ тата республикӑ хӗҫпӑшалӗсен тапӑнас хӑватне ӳстерчӗ. Политбӳро, ӳсӗмсемпе ҫитӗнӳсене палӑртса, кӗрешӳ татах та ытларах хӑйар пулассипе, халӑх ҫарӗсен хӑватне, пӗрлӗхне тата техникӑлӑ пултарулӑхне хӑпартас пулсан малашне пӗтӗм партин пысӑк вӑй хумалине партин манмала мар, тесе шутлать.

ИСПАНИРИ ФРОНТСЕНЧЕ

Испанин оборонӑ министерстви пӗлтернӗ тӑрӑх, йанварӗн 27-мӗшӗнче ҫапӑҫусем Теруел фронтӗнче Селадас тата Сингра (Теруелрен ҫурҫӗрпе хӗвеланӑҫнелле) секторӗсенче пулса иртнӗ, ҫав ҫапӑҫусенче пуҫарулӑх республикӑ ҫарӗсем йенче пулнӑ. Позицисем палӑрмалах улшӑнман. Республикӑ авиацийӗ ҫанталӑк начаррине пӑхмасӑрах, пӑлхавҫӑсен ҫарӗсем тӑракан линисем ҫине пысӑк ӑнӑҫлӑхпа бомбӑсем пӑрахнӑ.

Пӑлхавҫӑсен ҫарӗсенчен тарса килнисем каласа кӑтартнӑ тӑрӑх, Теруел фронтӗнче фашиссен тылӗнче фашиссен Арандӑпа Москардо генералсем хушшинче пысӑк хирӗҫӳсем пурри ҫинчен калаҫаҫҫӗ.

Гавас агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, республикӑ ҫарӗсем 1.071 высотана тата Сингра секторӗнчи Ойа йалӗ патӗнчи позицисене ҫирӗппӗн тытса тӑраҫҫӗ. Агентствӑ республикӑ чаҫӗсем Хилока йухан шыв хӗррине ҫырса тухни ҫинчен пӗлтерет, вӑл йуханшыв хӗррипе Теруелпа Карана пӗрлештерсе тӑракан чукунҫул кайать.

Еспань агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, йанварӗн 27-мӗшӗнче ирхине пӑлхавҫӑсен артиллерийӗ пӗр сехет хушши Мадрид ҫине персе тӑнӑ. Пуринчен ытла хула варринчи кварталсем сийен курнӑ. Виле-кенсем те пулнӑ.

Ытти фронтсенче лӑпкӑ.

(ТАСС).

Пӑлхавҫӑсен лагерӗнчи восстани

ПАРИЖ, 27. (ТАСС). Еспань агентстви ҫапла пӗлтерет: Испанири пӑлхавҫӑсен лагерӗнчен тарса пынисен ушкӑнӗ каласа панӑ тӑрӑх, йанварӗн 4-мӗшӗнче Сарагосӑра пӑлхавҫӑсен ҫарӗсем хушшинче восстани тухса кайнӑ. Арагонири вунҫиччӗмӗш ҫуран ҫар полкӗ восстани тунӑ, ҫав полкӑн казарминче чӑн-чӑн ҫапӑҫу пулса иртнӗ. Вилнисемпе аманнисем нумай шутланаҫҫӗ. Восстанийе пусарнӑ. Восстанире пулнисене персе пӑрахнӑ. Персе вӗлернисем хушшинче—виҫӗ капитан, тӑватӑ лейтенант тата вунӑ салтак.

КИТАЙРИ ВӐРҪӐ

ҪУРҪӖР КИТАЙРА

ХАНЬКОУ, 27. (ТАСС). Тяньцзин— Пукоу чукунҫулӗн ҫурҫӗр участкинчи фронтра йапонецсем Лаӈсадйаӈ (Йанчжоуран кӑнтӑрали чукунҫул станци) ҫӗнӗрен илнӗ. Изоусань районӗнче Китай ҫарӗсем ҫурҫӗрпе хӗвелтухӑҫ йенчен ҫавӑранса пырса, Йанчжоу йеннелле наступлени туса пыраҫҫӗ. Фронтӑн сылтӑм флангӗнче ҫапӑҫусем Мень-Инь (Йанчжоуран хӗвелтухӑҫнелле) йатлӑ хула патӗнче пыраҫҫӗ. Хулана пур йенчен те Китай ҫарӗсем хупӑрласа илнӗ. Йапони командованийӗ ҫав участка ҫине подкрепленисем илсе пырать.

Тяньцзин—Пукоу чукунҫулӗн ҫурҫӗр участки тӑрӑх пойассем Тенҫане (Йанчжоуран кӑнтӑрпа хӗвелтухӑҫнелле) ҫити ҫеҫ ҫӳреҫҫӗ.

ВАТАМ КИТАЙРА

ШАНХАЙ, 27. (ТАСС). Йапонецсем йышӑнса илнӗ районсенче, Йанцзы йуханшывӗнчен кантӑрала, партизанла йухӑм вӑйланса пынӑ май, Йапони ҫарӗсен ӗҫӗсем йӑвӑрланнӑ ҫӗмӗн йӑварланса пыраҫҫӗ. „Веньвэйбао" хаҫат пӗлтернӗ тӑрӑх, Китай партизанӗсен ҫакӑр пин ҫынлӑ отрйачӗсем Исин (Тайху кӳллин хӗвеланӑҫ ҫыранӗ) йатлӑ хулана йышӑннӑ. Ҫакӑн хыҫҫӑн Исин районне Йапони салтакӗсене вунӑ пин ҫын ытла куҫарнӑ. Малтан вӗсене Путунри партизанла йухӑма хирӗҫ кӗрешме йама тесе Ханчжоуран Шанхайа илсе пынӑ пулнӑ. Кунсӑр пуҫне тата Сучжоу— Цзйасин чукунҫул линийӗнче Йапонин тепӗр ҫурран ҫар бригади тӑрать, Йапони командованийӗ вӑл бригадӑна Китай партизанӗсене хирӗҫ ҫапӑҫма йанӑ.

Йанварӗн 26-мӗшӗнче Ханьчжоу участкинчи фронтра та ҫапӑҫусем пулса иртнӗ. „Хуамейваньбао" хаҫат пӗлтернӗ тӑрӑх, йапонецсем Цзйаньтан йуханшывӗ урлӑ каҫма пикеннӗ, анчах та вӗсен ӗҫӗ ӑнӑҫлӑ пулман. Китай ҫарӗсем пулеметсенчен пеме пуҫласан, вӗсем кайала таврӑннӑ. Ханьчжоуран кӑнтӑрпа хӗвелтухӑҫнелле китайецсем Йапони ҫарӗсене малала куҫса пыма чарас шутпа Тунлупа Цзйанде (Йанчжоу) хушшинчи шоссене ҫӗмӗрнӗ.

ХАНЬКОУ, 27. (ТАСС). Китайецсем Уху районӗнче Йапони ҫарӗсене кайала хӑваласа йанӑ. Китай ҫарӗсен позицийӗсем Шивейчжен ҫумӗпе (Уху хулинчен ҫирӗм километр кӑнтӑрпа хӗвеланӑҫнелле) иртсе пыраҫҫӗ.

Официаллӑ пӗлтернӗ тӑрӑх, йанварӗн 26-мӗшӗнче Китай авиацийӗ Нанкин ҫине пырса Йапони аэродромӗ ҫине бомбӑсем пӑрахнӑ. Йапонин 30 самолечӗ тӗппипех пӗтнӗ, темиҫе летчик вилнӗ. Китай авиацийӗ Йапони самолечӗсем аэродромран сывлӑша вӗҫсе хӑпарма хатӗрленнӗ вӑхӑтра пырса бомбӑсем пӑрахнӑ. Китай самолечӗсен тепӗр ескадрилйи Аньхуей провинцинче, Уху районӗнче тата Чжецзйан провинцин хӗвеланӑҫ пайӗнче Укан районӗнче Йапони позицисем ҫине бомбӑсем пӑрахнӑ.

Турцири террор

АНКАРА, 25. (ТАСС). Стамбулра коммунисӑма майлӑ пулнӑ тесе, Турцин паллӑ поэтне Назим Хикмета арӗсленӗ. Хаҫатсем ҫырнӑ тӑрӑх, унӑн сучӗ Анкара хулинче пулмалла.

Ленин палăртса хунă ĕççем пурнăçа кĕнĕ

В. И. Ленин вилни 14 çул тултарнине асăнса 1938 çулти йанварĕн 21-мĕшĕнче Пысăк Театрта пулнă чаплă-траурлă ларура А. А. ЖДАНОВ йулташ тунă доклад

Социалисăм çĕнтерни—тĕп итог

Йулташсем, 14 çул каярах ĕçетемлĕх аслă учителĕн тата йертсе пыраканĕн—Владимир Ильич Ленинăн пурнăçĕ татăлчĕ.

Çав кун Совет Союзĕнчи ĕççыннисем пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисемпе пĕрле Владимир Ильич Ленинăн аслă идейисене, вăл хушса хăварнисене тата палăртса хунă ĕçĕсене пурнăçа кӳртсе пынин итогĕсене тăваççĕ, пурăнса ирттернĕ çул-йĕре хаклаççĕ тата, Владимир Ильич хăйĕн пурнăçне панă ĕç çĕнтерӳвĕшĕн малашнехи кĕрешӳ çул-йĕрне палăртаççĕ.

Ленин хушса хăварнисене тата палăртса хунă ĕçĕсене пурнăçа кӳртнин чи чаплă итогĕ пирĕн çĕршывра социалисăм çĕнтерни пулать, паян-куна пирĕн çĕршывра обществăна тĕпрен урăхлатса çĕнетни пулать.

Сталин йулташ Мускав хулинчи Сталинский суйлав округĕнчи суйлавçăсен суйлав умĕнхи пухувĕнче каланă хăйĕн сăмахĕнче: „пирĕн патăрта социалисăма проста туса пыраççĕ çеç мар, вăл ĕнтĕ пурнăç йĕркине, халăхăн кулленхи пурнăç йĕркине кĕнĕ... Пĕр 10 çул каялла пирĕн патăрта социалисăм тума пулать-и йе çук-и тесе тавлашма пулнă та пулĕччĕ. Халĕ ĕнтĕ ку тавлашулă ыйту мар. Халĕ ĕнтĕ ку фактсен ыйтăвĕ, чĕрĕ пурнăç ыйтăвĕ, халăхăн пĕтĕм пурнăçне витĕр кĕнĕ йăла ыйтăвĕ“, терĕ.

Сталин йулташ тата çапла каларĕ:

„Пирĕн фабрикăсемпе заводсенче капиталиссемсĕр ĕçлеççĕ. Ĕçе халăх хушшинчен тухнă çынсем йертсе пыраççĕ. Çавна калаççĕ те ĕнтĕ пирĕн пурнăçа кĕнĕ социалисăм тесе. Пирĕн уйхирсенче çĕрĕçлекенсем помещиксемсĕр, кулаксемсĕр ĕçлеççĕ. Ĕçе халăх хушшинчен тухнă çынсем йертсе пыраççĕ. Çавна калаççĕ те ĕнтĕ пирĕн пурнăç йĕркине кĕнĕ социалисăм тесе, çавна калаççĕ те ĕнтĕ пирĕн ирĕклĕ, социалисăмла пурнăç тесе“.

Ленин принципĕсен, идейисен, хушса хăварнисен пит те пысăк çĕнтерӳвĕ вăл социалисăм халĕ Мускавпа Ленинградри рабочисемшĕн çав тери хаклă та çывăх ĕç пулни пекех, вăл ĕлĕк пит те кайа йулса пынă пулнă, капиталисăмпа патша йĕрки пит те пусарса лартнă пулнă, пит те пысăк нусмăрта пурăннă пулнă халăхсемшĕн те хаклă та çывăх ĕç пулса тăни пулать.

Халĕ социалисăм Совет çĕршывĕн чи айакри вырăнĕсене те кĕрсе вырнаçрĕ, пурнăç йĕркине кĕчĕ те пирĕн тăван çĕршыври кашни ĕççыннийĕн уйăрăлми тивлечĕ пулса тăчĕ, мĕншĕн тесен епĕр Ленин хушса хăварнисене тата палăртса хунă ĕçĕсене пурнăçа кӳртме пултартăмăр, експлоататорсемпе харампырсем çук обществă тума, рабочисем, хресченсем тата интеллигентсем пĕр-пĕринпе туслă пурăнса пĕрле ĕçлесе пурăнни çинче никĕсленсе тăракан обществă тума, ССР Союзĕнчи мĕн пур халăхсен ирĕклĕ союзĕ çинче никĕсленсе тăракан обществă тума пултартăмăр.

Пирĕн çĕршывра социалисăм çĕнтерни—вăл пирĕн çулпуçĕн, учителĕн—Ленинăн тĕп хушса хăварăвне пурнăçа кĕртнине пĕлтерет. (Ала çупаççĕ).

Йулташсем, епĕ кунта пирĕн çĕршыври социалисăм çĕнтерӳвĕсене, пирĕн индустрипе коллективлă хуçалăх çĕнтерӳвĕсене кăтартса паракан цифăрсемпе фактсене каласа тăрасшăн мар. Вĕсем пуриншĕн те çителĕклех паллă. Епĕ кунта, пирĕн революци хамăр çĕршыври ĕççыннисене политикăлă ирĕклĕх кăна мар, тата материаллă пуйанлăх та пачĕ, пуйан та культуралă пурнăç валли условисем туса пачĕ, çакăнпа вăл пур ытти революцисенчен уйăрăлса тăрать те, текен Сталин йулташ сăмахĕсене кăна аса илтересшĕн. Çав çĕнтерӳ пирĕн социалисăмла революцин чи пысăк, чи хаклă, чи паха çĕнтерӳвĕ пулса тăрать. Çав çĕнтерӳ революци малала çĕнтерӳлĕ пырассине татса парать. Çав çĕнтерӳ пирĕн пĕтĕм пурнăçа пит те шала витĕр кĕрсе пирĕн çĕршыври мĕн пур ĕççыннисене çирĕппĕн пĕтĕçтерет.

Ĕççынни массисем социалисăм çĕнтерӳне ăнăçлă тăвасшăн тӳссе-курнă çухатусем харама каймарĕç. Çав çухатусем, ĕççыннисем пуйан та культуралă пурнăç туйаннипе, хăйсен культурипе пурнăçăн материаллă условийĕсене пур йенчен те малала йама тата лайăхлантарса йама майсем туйаннипе хакне кăларчĕç. Çакă пирĕн революцийĕн калама çук пысăк вăйĕ пулса тăрать, пирĕн революцийе никам çĕнейми туса хурать.

Совет халăхĕн пĕрлĕхĕ—социалисăмăн калама çук пысăк çĕнтерӳвĕ

Йулташсем! Пирĕн çĕнĕ стройăн никĕсĕ государствă управленийĕн ĕçне ĕççыннисем тӳрремĕнех хутшăнни пулса тăрать.

Сталинла Конституцийе,—ку Конституцире социалисăм çĕнсе илнисене çырса палăртнă, ку Конституци ĕççыннисем чылай çулсем хушши пынă кĕрешӳпе строителствăна пула мĕн тунине пурне те çырса палăртнă,—çав Сталинла Конституцийе ĕçе йанă.

Совет Союзĕн Аслă Совет суйлавĕсем аслă сталинла Конституци тăрах пулса иртрĕç, ку Конституци пурне те тивĕç суйлав правине кирек мĕнле хĕснине те пĕтерсе лартрĕ, пирĕн çĕршыври граждансен—арçынпа хĕрарăмсен, мĕнле национальнăçпе рассине пăхмасăр—тулли пĕртан правине пурнăçларĕ. Ку ĕнтĕ пирĕн çĕршывра советла социалисăмла демократисăма пурнăçлас ĕçре тата та малала тунă утăм.

Декабĕрĕн 12 мĕшĕнчи суйлавсем,—ку суйлава суйлавçăсем 100 проц. пĕрех хутшăннă,—пĕтĕм пирĕн пурнăçри чаплă йавлени. Суйлавсем, Ленин—Сталин ĕçĕ тавра, Ленин—Сталин партийĕ тавра совет халăхĕн моральнă-политикăлă пĕрлĕхĕ тăни никам тунăйми факт иккенне кăтартса пачĕç. Суйлавсем, пирĕн халăх Ленин—Сталин аслă партине хăй вĕçĕмсĕр шанса тăрас ĕçре пĕр шухăшлă иккенне кăтартса пачĕç. (Тăвăллăн ала çупаççĕ).

Суйлавсем, пирĕн пĕтĕм кулленхи пурнăç пекех, тата та тата тепĕр хут çакна кăтартса пачĕç: ĕççыннисен чăн-чăн ирĕклĕхĕ пирĕн çĕршывра кăна пулма пултарать, ĕççыннисен чăн-чăн тăванлăхĕ пирĕн çĕршывра кăна пулма пултарать, мĕншĕн тесен пирĕн патăрта социалисăм çĕнтерчĕ. Ленинăн—уйрăм харпăрлăх уйăрса пырать, социалисăм пĕтĕçтерет, текен пророкла сăмахĕсем тӳрре тухрĕç.

Шăпах социалисăмла йĕркесем çĕнтерсе илнĕ никĕс çинче ĕççыннисен чăн-чăн тăванлăхĕ пирĕн патăрта тĕрекленчĕ. Пирĕн çĕршыври ĕççыннисен интересĕсем пĕрре: вĕсем хамăр тăван çĕршыва телейлĕ тăвасшăн социалисăмла производствăпа культурăна ӳстерсе хăпартма тата лайăхлатма тăрăшнине кăтартаççĕ, вĕсем, кашни ĕççыннийĕн телейлĕ пурнăç никĕсĕ пулса тăракан пирĕн обществăла пуйанлăха тĕреклетме тата нумайлатма тăрăшнине кăтартаççĕ.

Владимир Ильич çапла вĕрентнĕ: марксиссем-большевиксем пĕртанлăх вăл классене пĕтерни пулать тесе ăнланаççĕ. Пирĕн çĕршывра—социалисăм çĕнтернĕ çĕршывра, чăн-чăн ирĕклĕх, ĕççыннисен чăн-чăн тăванлăхĕ, чăн-чăн пĕртанлăхĕ пурнăçланса пырать, мĕншĕн тесен пирĕн çĕршывра експлоататорла классене пĕтерсе лартнă, класлă уйрăмлăхсене пĕтерсе пырасси, хулапа йал хушшинчи хирĕçлĕхсене пĕтерсе пырасси хăвăрт утăмсемпе малала пырать.

Пирĕн патăрта кирек хăш чернорабочи те ирĕклĕ çын, хăйĕн политикăлă аталанăвĕ тĕлĕшпе капиталисăмла çĕршыври рабочирен танлаштармийех малта тăрать, капиталисăмла çĕршыври рабочи—капитал чури, експлоататорла классен чури.

Социалисăм çĕнтерӳвĕ никĕсĕ çинче кăна советлă социалисăмлă демократисăм йĕшĕрсе чечекленсе кайма пултарчĕ. Пролетариат диктатури, Ленин вĕрентнĕ пек, демократисăм формисене, ку демократисăмпа ĕççыннисен класĕсем чăннипе усă курассине халиччен курман таран анлăлатса йама тултармала, улăштарассине пур-пĕр пуçласа йамала пулнă.

Çав йенчен Аслă Совета депутатсене суйлани хăйне уйрăм паха вырăн йышăнса тăрать, мĕншĕн тесен пирĕн çĕршыври ĕççыннисем хăйсен прависемпе вĕçне çитийех усă курчĕç.

Пирĕн советлă демократисăм вăрттăн сасăлас чухнехи пурне те тивĕç, тӳрĕ тата пĕртан суйлав прави çинче кăна мар никĕсленсе тăрать. Вăл ĕççыннисен ĕçлев, канăç, культуралă та пуйан пурнăç прави çинче,—социалисăм çĕнтерӳвĕсенчен тухса тăракан правасем çинче никĕсленсе тăрать.

Шăпах çавăнпа та ĕнтĕ советлă социалисăмăлă демократисăм кирек хăш буржуалă демократисăмран та танлаштармийех çӳлте тăрать; буржуалă демократисăм рабочисене тăванлăх, пĕртанлăх тата ирĕклĕх çинчен сăмах çапса улталать, чăннипе капитал пусмăрне сыхласа усрать, обществă пĕр пайĕшĕн пуйанлăх тепĕр пайĕшĕн кĕлмĕçлĕх сыхласа усрать, ĕççыннисен массисем капитала економикăпа ăс-пуç шухăшĕсем тĕлĕшпе пĕтĕмпех пăхăнса тăрассине, пур йенчен те вĕсем пĕртан правалă пулас маррине сыхласа усрать. Капитал пуçпулса тăнă вăхăтра ĕççыннисен массисем буржуалă демократи вĕсене формальнă паракан çав тери пĕчик правасене те ĕнтĕ пурнăçа кӳртме пултараймаççĕ,—демократийĕн çавăн пек пит те пĕчик прависенчен те нимĕнле йĕр те йулман çĕршывсем çинчен каламастпăр та ĕнтĕ.

Социалисăм çĕнтерӳвĕн никĕсĕ çинче, пирĕн çĕршыври ĕççыннисен, социалисăмлă хуçалăха лайăхлантарса тĕреклетес, пуйанлăхпа культурлăха ӳстерес пĕртен-пĕр тĕллевпе пĕрлешĕннĕскерсен, тăванлăхĕпе пĕрлĕхĕн никĕсĕ çинче—çав никĕс çинче пулса иртрĕç пирĕн çĕршыври чи демократилĕ суйлавсем.

Пирĕн халăхăн моральнă пĕрлĕхĕ, суйлав кунĕнче—декабĕрĕн 12-мĕшĕнче—çав тери хăватлăн палăрнăскер, Аслă Совет Сессийĕ ĕçĕсенче те çав тери вăйлăн палăрчĕ.

Аслă Советăн ĕçĕ пур депутатсем те пĕр шухăшлă пулнине кăтартрĕ, депутатсем пĕр шухăшлă пулнийĕ, пĕртен-пĕр тĕллевпе пĕрлешĕннĕ пирĕн мĕн пур Совет халăхĕн пĕрлĕхлĕ камăл (ирĕк) пулнинчен килнĕ.

Депутатсем пĕр шухăшлă пулнийĕ—Аслă Совет Аслă Советăн президиумне тата хăйĕн ытти органĕсене, çавăн пекех тата Вячеслав Михайлович Молотов пуç пулса тăракан Халăх Комиссарĕсен Советне (ала çупаççĕ), çав тери пĕрпулса суйланинче те палăрчĕ. Халăх хăватлăн ырласа, хăйĕн пĕрлĕхне хăватлăн демонстрацилесе тăнă лару-тăрура,—çавăн пек лару-тăрура ĕнтĕ пулса пынă Аслă Советăн пĕтĕм ĕçĕ,—халăх массисем хăйсен партипе хăйсен правителствине вĕçĕмсĕр йуратни курăнчĕ.

Халăхпа унăн руководстви, унăн правителстви хушшинчи çавăн пек пĕрлĕх тĕнчере пĕр çĕршывра та çук, пулма та пултараймасть. Ку пирĕн çĕршывра кăна социалисăм çĕнтернĕ çĕршывра кăна пулма пултарать. (Ала çупаççĕ).

Совет çĕршывĕн пур вырăнĕсенче те ĕççыннисем, рабочисемпе хресченсем, социалисăм тăвас тĕлĕшпе аслă ĕç тăваççĕ. Пирĕн патăмарта—ĕçлев чыслăх, чаплăх тата паттăрлăх ĕçĕ пулса тăчĕ. Пирĕн патăмарта кашни ĕççыннинех чапа кăлараççĕ тата уншăн тăрăшаççĕ. Кашни ĕççыннийĕх уншăн партипе правителствă тăрăшнине туйса тăрать, вăл социалисăм строителĕсен тата труженикĕсен коллективĕн уйăрăлми пайĕ иккенне пĕлсе тăрать.

Декабĕрĕн 12-мĕшĕнчи суйлавсен паллă уйрăмлăхĕ вăл—суйлавçăсен кашни сийĕ,—ваттисемпе çамрăксем те рабочисемпе интеллигентсем те, хресченсемпе ремесленниксем те, хĕрарăмсемпе арçынсем те,—хăйсен суйлав сассене пирĕн партишĕн, социалисăмăн çĕнтерӳвĕшĕн, хăйсен телейлĕ те культуралă пурнăçĕшĕн пама суйлав йешчĕкĕсем патне пыни пулать.

Пĕтĕм халăх, ватти-вĕттипех пĕрлешрĕ, халăхăн кашни сийĕх хамăр обществари хăйĕн рольне пĕлсе тăрать, пĕрлехи ĕçе хăй хутшăннин пĕлтерĕшне пĕлсе тăрать. Ĕçхалăхĕн кашни отрйачĕ социалисăмлă революцирен вăл капиталисăмпа патша йĕрки чухне шухăшлама та пултарайманнине илнине пĕлсе тăрать. Пирĕн çĕршыври тӳрĕ чĕрелĕ кашни ĕççыни уншăн сталинлă тăрăшнине, ун çине сталинла тимлĕхпе пăхнине пĕлсе тăрать. Çавăнтан килчĕ те ĕнтĕ 1937 çулхи декабĕрĕн 12-мĕшĕнче пулса иртнĕ суйлавра халăх пĕрлешӳлĕ те пĕтĕçӳлĕ пулни.

Геройлăх пирĕн халăхăн пурнăç йĕркине кĕчĕ

Йулташсем! Пирĕн строй çакăнпа калама çук ырă: вăл—капиталисăм чухне палăрса тăман, паллă пулман çынсене, капиталисăм чухне етемлĕхĕн тусанĕ пулса йулмалли çынсене, вĕсем çинчен кивĕ вăхăтра каланă пек, „ытлашши“ çынсем пулмали çынсене, малала йарса пырать. Алексей Максимович Горький хăйĕн произведенийĕсенче çав „ытлашши“ çынсен—ĕççыннисен, капиталисăм пусмăрлăхĕ пусса лăпчăтнă, кивĕ, патша Росçийĕнчи пăч тĕттĕм пурнăç пĕтернĕ çынсен—пурнăçĕ çинчен çав тери тĕрĕс ӳкерсе çырнисене астуса илĕр-ха.

Совет çĕршывĕнче ытлашши çынсем çук. Пирĕн патăрта—çĕмĕрсе тăкнă експлоататăрла классен ниме тăман, совет влаçне хирĕç кĕрешес хĕçпăшала пăрахман тепренчĕкĕсем çеç ытлашши çынсем пулса тăраççĕ. Совет çĕрĕ çинче ĕççыннисене, ĕçпе пурăнакансене—хисеп те чыс.

Ĕççыннисем çĕнĕ пурнăçа хăйсем, хăйсен аллипе тăваççĕ. Акă мĕншĕн ĕнтĕ пирĕн патăрта халăх таланчĕсем çав тери тараватлăн чечекленсе ӳсеççĕ. Акă мĕншĕн ĕнте халăх социалисăм строителствин тĕрлĕ участкисенче талантлă руководителсене çĕршер пинĕн кăларса пырать.

Акă мĕншĕн ĕнтĕ, йулташсем, пирĕн патăрта стахановла йухăм саралса пырать. Чи çавăнпа ĕнтĕ халăх кашни куллен çĕнĕрен те çĕнерен еç геройĕсене, оборонă геройĕсене, авиаци геройĕсене, культура, искусства, наукăпа техникă маçтăрĕсене кăларса пырать. ССР Союзĕнче ĕççыннисен геройлăхĕ пурте йышăннăскер, пур çĕрте те саралнăскер пулса тăрать.

Пирĕн патăрта геройлăх вăл халăхăн пурнăç йĕркине кĕчĕ.

Капиталисăмла çĕршывсенче геройлăх çинчен сас-хура тавраш, темскер, илтĕнмест! Ăна ăнланмала та ĕнтĕ. Унта, капиталисăмла çĕршывсенче, çынна тавар вырăнне хурса çеç хаклаççĕ. Çынна тенкĕпе хакланă çĕрте, çыннине хăйне мар, унăн ĕçвăйне çеç хакланă çĕрте,—капиталисăмла çĕршывсенче çавăн пек вăл,—унта геройлăх валли вырăн çук.

Социалисăм çеç çынăн пахалăхне виçме çук çӳле хăпартать, унăн пултарулăхĕсемпе таланчĕсем пур йенпе те палăрма кирлĕ мĕн пур условисене туса парать. ССР Союзĕнче кашнийĕх хăйĕн таланчĕсене палăртса герой пулма пултарать.

ССР Союзĕнчи социалисăмăн практики, фашисла тата пĕтĕм буржуалă теорисене—пĕр расăсем ытти расăсемпе танлаштарсан уйрăмах пултарулă текен, арçынсем хĕрарăмсемпе танлаштарсан уйрăмах пултарулă текен, рабочи класăн пултарулăхĕ буржуазине танлаштарсан сахалрах текен теорисене—аркатса тĕпрентерсех пăрахрĕ. Пирĕн патăрта çав фашисла, етеме кураймасла теорисене аркатса тĕпрентерсех йанă. Пирĕн патăрта кашни халăх, хăйĕн аталанăвĕн кирек те хăш сыпăкĕнче социалисăм строителствине хутшăнсан та, хăйĕн культуралă тата хуçалăхлă аталанăвĕнче ытти халăхсене хуса çитме пултарнине ĕçре кăтартса панă. Пирĕн патăрта хĕрарăм арçынпа пĕртан правалă пулмалине ĕçпе кăтартса парса, кулленхи пурнăçа кĕртнĕ, мĕншĕн тесен хĕрарăм—работницă заводра, фабрикра арçынпа йунашар станок патĕнче тăрать, арçынпа пĕрле совет учрежденийĕсенче ĕçлет. Йалта колхоз стройĕ хĕрарăм-колхозницăна кулленхи пурнăçра арçына пăхăнмасăр пурăнмала турĕ. Ĕçкунĕ хресчен хĕрарăмне хăй тӳпине тивекен ырлăхăн ĕçлени чухлĕ илме май парать. Çавă пулать те ĕнтĕ пирĕн патăрта ĕçре пурнăçа кĕртнĕ арçынпа хĕрарăм пĕртанлăхĕн чăн-чăн никĕсĕ. ССР Союзĕнче хĕрарăм пур çĕрте те—государствă управленинче, хуçалăхлă тата культуралă пурнăçра арçынпа йунашар ĕçлет.

Пирĕн çамрăксене етеме кураймасла, капиталисла идейăсем минретмен. Совет çамрăкĕсен хальхи пурнăçĕ калама çук ырă, вĕсен малашлăхĕ тата ырăрах пулать. Вĕсем тĕрлĕрен шовинисла, расисла тата ытти капиталисла, фашисла, реакцилĕ идейăсенчен ирĕклĕ.

Большевиксен партийĕ йертсе пыни—рабочисемпе хресченсен çĕнтерĕвĕсен никĕсĕ

Владимир Ильич Ленин пире çĕнтерӳ тума чи кирли пусмăр тӳсекен ĕççыннисене хăйсен вăйне ĕненекен тăвасси пулать, тесе вĕрентнĕ. Владимир Ильич Ленинăн çак кăтартăвне, унăн çак халалне пирĕн çĕршывра пĕтĕмĕшпех пурнăçа кĕртнĕ. Пирĕн çĕршыври ĕççыннисем хăйсен вăйне ĕненеççĕ. Вĕсем хăйсен кĕрешӳне тата ĕçне пула социалисăмăн çĕнтерĕвĕсене тунине пĕлсе тăраççĕ. Вĕсем хăйсен вăйне ĕненни малашне тата пысăкрах çĕнтерӳсем парассине пĕлсе тăраççĕ.

Çак йенчен илсен ССР Союзĕнче социалисăм çĕнтерни пĕтĕм тĕнчипе калама çук пысăк вырăн йышăнса тăрать. ССР Союзĕнчи рабочи класпа хресченсем, хăйсен вăйне шанса хăйсене капиталисăм майкăчĕ патне çĕтерекен меншевиксем, ес-ерсем, троцкисла-бухаринла предателсем пек тĕрлĕ йышши оппортуниссем йенчен улталама памарĕç. Совет Союзĕнчи рабочи класпа хресченсем хăйсен примерĕпе пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисене харпăрхăйĕн вăйне ĕненни мĕне пĕлтернине, рабочисемпе хресченсем çĕнĕ, социалисăмла обществă тума пултараймаççĕ текен тăшманла сехĕрленӳ хыççăн кайманни, çав тăшмансен пăшăлтийĕ хыççăн кайманни мĕне пĕлтернине кăтартса пачĕç. Рабочисемпе хресченсем çапла хăйсен вăйне ĕненнине большевиксен аслă партийĕ çитĕнтерсе çирĕплетнĕ.

Халăхăн халиччен курман пĕрлĕхĕ пирĕн хальхи пурнăçăн никĕсĕ пулса тăрать, вăл социалисăм çĕнтерĕвĕсен результачĕ,—халăхăн çак пĕрлĕхĕ вăл пирĕн партин чаплă çĕнтерĕвĕсемпе, ленинисăмăн чаплă çĕнтерĕвĕсемпе таччăн çыхăнса тăрать.

Пирĕн çакна пĕр минутлăха та манмала мар: большевиксен партийĕ хăйĕн чаплă çĕнтерĕвĕсене гевилĕ учителсене пула—Ленинпа Сталина пула, парти çинчен ленинла-сталинла вĕрентнине тасан сыхласа пурнăçа кĕртсе пынине пула тунă.

Ленин—пирĕн партин никĕсне хывакан—çĕнĕ санарлă парти тунă, çак çĕнĕ санарлă парти пролетариат çĕнтермеле турĕ.

Ленин: пирĕн партин çĕнтерӳ тума пролетариат диктатурин чи аслă принципне—рабочи класпа хресченсен союзне сыхласа усрассине йаланах асра тытмала, тесе вĕрентнĕ.

Ленин: пролетариата çĕнтерӳ тума кирешӳлĕ парти, революцилĕ парти, пролетарисене влаçшăн кĕрешĕве илсе пыма çителĕклĕ хăйулă парти, революцилĕ лару-тăрури йывăр условисенче мĕн тумалине пĕлмелĕх опытлă парти, тĕллев патне кайас çул çинчи шыв айĕнчи мĕн пур тата пур тĕрлĕ чулсенчен те ăнаçлăн иртсе кайма çителĕклĕ çавăрăнăçулă парти кирлĕ, тесе вĕрентнĕ.

Ленин, пролетариатăн тĕлĕнмеле ырă инструменчĕ пулса тăракан парти туса, пире—парти вăл, пролетариат организацийĕн ытти формисемпе—профсойузсемпе, кооперативсемпе, государствă организацийĕсемпе танлаштарсан, пролетариатăн класлă организацийĕнчи çӳлĕ форми пулса тăрать, партин пролетариатăн ытти организацийĕсене малала илсе пымала, йертсе пымала, тесе вĕрентнĕ.

Ленин: пролетариат диктатурине ăна—тĕрĕс çулпа илсе пыракан вăй пулса тăракан парти урлă анчах пурнăçа кĕртме пулать, тесе вĕрентнĕ.

Ленин: пролетариат диктатурийĕ вăл пĕр парти, коммуниссен партийĕ, йертсе пырассине ытти партисемпе пайламан, пайламала та мар парти йертсе пырсан анчах тулли пулма пултарать, тесе вĕрентнĕ.

Ленин, пире—партире тимĕр пек çирĕп дисциплинăсăр пролетариат диктатурин експлоататорсене пусарас тата класлă обществăран социалисăмла обществă тăвас задачине пурнăçа кĕртме çук, тесе вĕрентнĕ.

Ленин хамăрăн парти çинчен каласа, пирĕн партин вăйĕ рабочи класăн авангарчĕпе рабочисен массисем пĕрне-пĕри шанса тăнинче пулать, тесе вĕрентнĕ. Партин массăсен сассине сисĕмлĕн итлемеле, массăсен революцилĕ инстинкчĕ çине тимлĕ пăхмала, массăсен кĕрешӳ практикине вĕренсе пымала, массăсене вĕрентмелĕ анчах мар, массăсенчен те вĕренмеле, тенĕ вăл. Çакă вăл рабочи класăн авангарчĕ, урăхла каласан, парти тата ĕççыннисен масси пĕрне-пĕри шанассине туса хурать.

Çакă вăл, тата, партин хăйне ĕççыннисен массисем шаннине куллен кун аталантарса, хăй йенне çавăрса пымалине пĕлтерет, унăн массăсене хăйпе пĕрлĕ пыракан тумалине, массăсене пĕрлештерме пĕлмелине пĕлтерет. Çавăн чухне тин вăл хăйĕн класĕн çулпуçĕпе учителĕ пулма пултарать.

Сталин йулташ, çав положенисене ăнлантарса, çапла кăтартса пана: „Большевиксен вăйĕ, коммуниссен вăйĕ—вĕсем хамăр партийе партире тăман мĕлйун йышлă активпа çыхăнтарса тăма пĕлнинче“. Вăл çапла кăтартса пана: „Епĕр, большевиксем, партире тăман мĕлйун йышлă рабочисемпе колхозниксен шанчăкне парти йенне çавăрма пĕлмен пулсан, халь тунă çитĕнӳсене тăвайман пулнă пулаттăмăр“.

Çав шанчăка парти йенне çавăрма мĕн кирлĕ-ха?

Сталин йулташ çапла калать: „Çакна валли партире тăракансем партире тăманнисенчен уйăрăлса тăманни, партире тăракансем хăйсен партилĕ хуппийĕ ăшне хупăнса ларманни, вĕсем хăйсем партире тăнипе мăнкăмăлланманни, партире тăманнисен сассине итлени, вĕсем хăйсем партире тăманнисене вĕрентнипех чаранса тăманни, хăйсем те вĕсенчен вĕренни—кирлĕ“, (Сталин, „Вопросы ленинизма“, изд. 10-е, стр. 534).

Сталин йулташ, малала, коммуниссен хăйсен партилĕхĕпе каппаймала мар, партире тăманнисенчен уйăрăлмала мар, вĕсем умĕнче сăмсана каçăртмала мар, тесе темиçе хут та кăтартса пана. Сталин йулташ—„...мăнкăмăлланса пуçа çӳле ыватни мар, хăйне мăнна хумасăр ĕçлени хитрелетсе тăрать большевика“ тесе каланине партийецсен асра тытас пулать.

Йулташсем! Ленин—Сталин парти çинчен вĕрентнин çав тĕп положенийĕсене пурне те, парти мĕнле пулмали çинчен Ленин халалласа хăварнисемпе кăтартса панисене пурне те ăнланса илнĕ парти пирĕн пур-и?

Çапла, йулташсем, çавăн пек парти пирĕн пур.

Ку партийе, Ленин хыççăн, Сталин йулташ ӳстерсе, Ленин кăтартса хăварнă çулпа илсе пычĕ, социалисăм тăвассишĕн пур тăшмансене те хирĕç кĕрешĕве хăвхалантарса, организацилесе пычĕ. (Нумайччен ала çупаççĕ).

Пирĕн хамăрăн пĕтĕм ĕçлевĕ, коммуниссем, Ленин каланă пек, халăх тинĕсĕнче тумлам пулса тăнине, епĕр халăх ăнланнине тĕрĕссен палăртса тăрсан тин çĕршыва тытса тăма пултарнине асра тытса, халăх урлă тĕрĕслесе пымала,—Ленин Сталин вĕрентĕвĕ çавна йаланах асра тытать.

Пирĕн парти халăх шанăçне хăйне майлă çавăрни пирĕн партин чаплă çĕнтерĕвĕ пулса тăрать. Суйлавçăсем çĕр процента йахăнах коммуниссемпе партире тăманнисен блок кандидачĕсемшĕн сасăлани, çавăн пек блок пулса тăни хăйех те халăх пирĕн парти çине никам çĕмĕрейми çирĕп шанчăк хунине кăтартса тăрать. Пирĕн партин политикăлă çул-йĕрĕпе практикăри руководствине халăх урлă тĕрĕс-

(Йулашши 2-мĕш страницăра).

Ленин палăртса хунă ĕççем пурнăçа кĕнĕ

А. А. ЖДАНОВ йулташ доклачĕн йулашки

лени чăн-чăн тĕрĕслÿ пулчĕ, çак тĕрĕслÿ пирĕн партийе халăх чăннипех шанса тăнине кăтартса пачĕ.

Аслă Совет суйлавĕ пĕтĕм тĕнчене—большевиксен партийĕ чăннипех Совет Сойузĕнчи ĕççыннисен малти авангарчĕ пулнине, ăна Совет çĕршывĕнчи пĕтĕм ĕççыннисем шанса тăнине кăтартрĕ. (Ала çупаççĕ).

Халăх тăшманĕсене пĕтĕмпех тăпăлтарса пĕтерер

Владимир Ильич вилнĕ хыççăн пирĕн партине Ленин çулĕпе Сталин йулташ илсе пычĕ. Сталин йулташ, Ленин ĕçĕсене малала йаракан, партине социалисăм çĕнтерĕвĕшĕн кĕрешме хĕçпăшаллантарнă, пролетариатăн çĕкленÿ тапхăрĕсен условисенчи, унтан вара социалисăм строителстви анлăн сарăлнă условисенчи кĕрешÿвĕн теорине, тактикине, стратегине туса ăна малала йанă. Сталин йулташ ывăнма пĕлмесĕр партине çĕнтерÿ патĕнчен çĕнтерÿ патне илсе пырат, ăна хавхалантарат, социалисăмла аслă революци саманинче, тĕнчĕри пысăк çапăçусен саманинче тăшмансемпе мĕнле кĕрешсе вĕсене мĕнле çĕнтермелине вĕрентсе пырат. (Тăваллăн ала çупаççĕ).

Ленинпа Сталин пирĕн парти çинчен каланă чухне—парти речĕсенче тимĕр пек çирĕп дисциплинă тума кирли çине, партине оппортунисла елементсенчен тăтăшах тасатса пыма кирли çине кăтартнă. Çак йенчен пăхсан, йулашки çулсен, уйрăмăнах — 1937 çулăн урокĕсем питех те вĕренмеле пулчĕç.

1937 çул—пирĕн партине хĕсĕнсе кĕнĕ троцкисла, бухаринла тата ытти шпионсене, разведчиксене, диверсантсене, çынвĕлеренсене çĕмĕрсе тăкнă çул пулчĕ.

1937 çул — хуçалăхпа культурă йенĕпе, Хĕрлĕ çара тĕреклетес йенĕпе, ытти патшалăхсемпе мирлĕн пурăнас йенĕпе тунă çитĕнÿсем çумне епĕр, большевиксем, Сталин йулташ йертсе пынипе, тата тепĕр пысăк çитенÿ хушнă çул пулчĕ. Епĕ кунта буржуалă разведкăсемпе, вĕсен пирĕн хушăри агентурипе кĕрешмели майсемпе меслетсене лайăхах вĕренсе çитме пуçлани çинчен калатăп.

Пирĕншĕн илемлĕ мар факт çинчен — пире капиталисăмла тĕнче хупăрласа тăни çинчен маннă, троцкисăм тахçанах ĕнтĕ рабочи класри политикăлă йухăм пулма пăрахса тара кĕрешнĕ вăрăхурахсемпе пуç касансен банди пулса тăни çинчен маннă работниксене хытă çапни кирлĕ пулчĕ.

Сталин йулташ пире пĕрмайах капиталисăмла тĕнче хупăрласа тăнине манма йураманни çинчен, капиталисăмла тĕнче пирĕн патра хăйĕн разведчикĕсемпе агенчĕсене йарса тăнине, малашне те йарса тăрассине манма йураманни çинчен вĕрентет. Сталин йулташ пирĕн партине—чăннипе сыхăлăха мĕнле организацилеме кирлине, икĕпитленнипе партине кĕрсе партине шал йенчен хавшатма тăрăшнă, йутçĕршыв капиталне сутăннă, тăван çĕршыва сутнă, хамăр çĕршыва каллех капиталиссемпе, çĕрулпучĕсене çавăрса килме тăрăшнă, рабочи класпа хресченсем çине пусмăрпа експлоатаци майкăчне тăхăнтарса лартма хăтланнă пур йышши мерзавецсене те мĕнле çĕмĕрме кирлине ĕçре кăтартса вĕрентрĕ.

1937 çул—Ленин хушса хăварнисемпе кăтартса панисене пурнăçа кĕртсе пынă историне—халăх тăшманĕсене çĕмĕрсе тăкнă çул пулса кĕрет. Владимир Ильич пире, халĕ Сталин йулташ вĕрентнĕ пекех, тăшман кĕрсе тухакан пĕтĕм шăтăк-çурăка тупса пĕлме, тăшмана тытса çĕмĕрсе тăкма вĕрентнĕ.

1937 çул историне халăх тăшманĕсен чейе те киревсĕр кĕрешÿ меслечĕсене хирĕç хĕçпăшалланса тăнă çул пулса кĕрет.

1937 çул историне пур йышши тăшмансене те çĕмĕрсе тăкмала çапса хуçнă çул пулса кĕрет. Пирĕн парти халăх тăшманĕсемпе кĕрешнĕ çĕрте тата ытларах тĕрекленчĕ, вăйланчĕ, çак çитĕнĕве епĕр хамăрăн, Н. И. Йежов йулташ йертсе пыракан, совет разведкине тĕреклетнипе турăмăр. (Ала çупаççĕ).

Халĕ ĕнтĕ халăха хирĕç тĕлĕнмеле киревсĕр, сутăнчăклă каварлашу тума хĕтĕртекенни камсем пулнине пĕлетпĕр епĕр. Халĕ ĕнтĕ çак тăшмансем ăçтан пуçтарăннине те пĕлетпĕр. Халĕ ĕнтĕ вĕсене капиталисăмла контрразведкăсемпе çак ĕç валли йатарласа тунă учрежденисенче мĕнле вĕрентнисене те пĕлетпĕр. Вĕсем сехĕрленсе ÿкекенсем, хăравçăсем, сутăнчăксем, сутакансем—хăй вăхăтĕнче чылай çулсем хушши Ленина хирĕç, пирĕн партине хирĕç кĕрешсе пынă, вĕсем пуринчен ытла—фашиссен ата тĕпне çулама йуратаканскерсем. Епĕр çак сутăнчăксене, фашисăм агенчĕсене аркатмалипех çапса хуçрăмăр, малашне те епĕр вĕсене нимĕн хăвармиччен пĕтерсе пырăпăр. Çак çĕлен-калтасем валли Совет çĕрĕ çинче вырăн çук. (Ала çупаççĕ).

Пирĕнтен, коммуниссенчен нумайĕшĕ тăшманăн тискерле кĕрешÿ меслечĕсене чухласа илме çителĕклĕ таранах таканланайман пулнă пулсан, йулашки çулсенче епĕр хăйар шкул витĕр тухрăмăр. Революцилĕ сыхăлăха вăйсăрлатнине пула сахалах мар йун тăкмала пулчĕ пирĕн. Сăтăрçăсем пирĕн совет ĕçне сахалах мар амантрĕç.

Халĕ епĕр тăшмансене палăртса вĕсен ирсĕр ĕçĕсене сирсе йама пĕлекен пултăмăр. Нимĕн иккĕленмели те çук, тăшмана епĕр, вăл темĕнле маскă тăхăнсан та, вăл пирĕн патра темĕнле йарлăкпа витĕнсе килсен те тĕпĕ-йĕрĕпех пĕтерĕпĕр. Халĕ çак ĕçе ĕнтĕ большевиксен партийĕпе пирĕн çĕршыври ĕççыннисем тĕреклĕнех çĕнсе илнĕ. Халăх тăшманĕсене палăртас ĕçре совет разведкине пĕтĕм халăх пулăшса пырат.

Капиталисăм тĕнчи хупăрласа тăнине манмала мар

Йулташсем! Социалисăм çĕнтерĕвĕсем, Совет Сойузĕн оборонă хăвачĕ тĕрекленни, Совет правительствине парти мирлĕ политикă тытса пыни пирĕн çĕршыври ĕççыннисене 16 çул хушши ĕнтĕ мирлĕн ĕçлеме май пачĕ. Çак мирлĕ пурнăç тума пире ансатах пулманнине пĕлетпĕр епĕр. Епĕр çавăн пекех тата авантуриссем, реакционерсем, фашисла правителствăсем темиçе хутчен те мирлĕ пурнăçа пĕтерсе лартма пăхнине, пирĕн мирлĕ строителствă ĕçне кансĕрлеме тăнине пĕлетпĕр. Вĕсем çакăн пек тума пултараймарĕç, мĕншĕн тесен пире Сталин йулташ, пĕтĕм тĕнчери буржуазин çулĕсемпе çул йÿписен тупсăмне пĕлекен, пирĕн совет карапне тĕрлĕ чăрмавсем хушшипе илсе пыма пĕлекен Сталин йулташ йертсе пырат, вăл мирлĕ пурнăç тума пур майсемпе те усă курма пĕлет. Çавăнпа та епĕр, Совет Сойузĕнчи ĕççыннисем мирлĕ лару-тăру тапхăрĕнче пурăнатпăр. (Ала çупаççĕ).

Анчах епĕр пĕр самантлăха та пире капиталисăм тĕнчи хупăрласа тăни çинчен манма пултараймастпăр. Капиталисăм тĕнчи пирĕн патра разведчиксем, шпионсем, диверсантсем, террориссем йарса тăнине кăтартакан факт хăйех, вĕсем пире ниххăш йенчен те лапăртама ан пултарччăр тесен, пирĕн сыхăлăхла, сивĕч куçлă пулма кирли çинчен, ик куçĕпе те вичкĕн пăхса тăма кирли çинчен калат.

Епĕр, реакцилĕ фашисла патшалăхсем пире хирĕç вăрçа хатĕрленнине пĕлетпĕр. Çакна пирĕн, паллах, хисепе илес пулат. Анчах, çакăнпа перлех, тата епĕр фашисăма отпор пама хатĕр тăракан вăйсем ÿссе тĕрекленнине те пĕлетпĕр. (Ала çупаççĕ).

Совет Сойузĕ, интернационалла принципсене çирĕппĕн тытса пынипе, етемлĕхĕн малта тăракан, прогрессивлă пĕтĕм елеменчĕсен йухăмне пулăшса малала йаракан фактор пулса тăрат.

Епĕр республикăлă Испани çине йуратса пăхни пурне те паллă. Епĕр Китай халăхĕ çине чунтан йуратса пăхни те паллă. Китай халăхĕ Йапони авантурисĕсене хирĕç паттăрăн кĕрешет.

Пайанхи кун, Ленин вилни 14 çул çитнĕ кун, пирĕн шухăшсем, пирĕн туйăмсем кĕрешекен Испани халăхĕпе пĕрле, кĕрешекен Китай халăхĕпе пĕрле, вĕсене епĕр çĕнтерÿ сунатпăр. Вĕсем империалиссене хирĕç кĕрешÿре çĕнтерессе епĕр хыттăнах шанса тăратпăр. (Тăваллăн ала çупаççĕ).

Совет Сойузне хирĕç вăрçăсем пулма пултарассине манма йурамаст пирĕн. Акă мĕншĕн ĕнтĕ пирĕн Хĕрлĕ Çарăн техникипе хăватне вăйлатмала. Акă мĕншĕн епĕр правителствăпа Аслă Совет Тинĕс Çар Флот Комиссариачĕ организацилесси çинчен йышăннă решенине хĕрÿлĕн саламлатпăр. Çак решенипе пирĕн хамăрăн хăватлă Хĕрлĕ Çар çумне Совет Сойузĕн хăвачĕпе вăйне виçелĕ таран, пирĕн социалисăмла аслă çĕршывăн авторитетне виçелĕ таран пысăк вăйлă тинĕс-çар флочĕ хушма усă курас пулат. Çакна та епĕр, иккĕленмели çук, тăватпăрах. (Ала çупаççĕ).

Епĕр вăрçăсем пулма пултарассине манмастпăр, пирĕн сыхă тăмала. Тăшман Совет Сойузĕн таса чиккисене пăсма хăйат пулсан—вара епĕр хамăрăн Хĕрлĕ Çар вăйĕ çумне, пирĕн чаплă авиаци вăйĕ çумне, пирĕн тинĕс—çар вăйĕ çумне çĕр çитмĕл мĕлйунлă халăхăн моральлĕ—политикăлă пĕрлĕх вăйне хушăпăр, вара Совет чиккисене пăсма хăйакана хуйăх пулĕ: вăл хăй çинче совет халăхĕн гигантла тата çĕнтерейми вăйне тÿссе курĕ. (Тăваллăн ала çупаççĕ).

Ленинла-сталинла сăнарлă дейателсем пулмала

Йулташсем! Пирĕн хуçалăхăн пур отраçлисемпе культурăра тунă ăнăçусемпе çитĕнÿсем чăннипех те питĕ пысăк. Анчах Ленинпа Сталин пире çитĕнÿсемпе иртĕнсе кайма, мăнаçланма хушмаççĕ, çитĕнÿсене тĕплĕн хисепе илме вĕрентеççĕ. Халăх тăшманĕсене тупса палăртнă май, фашисла разведкăсен агенчĕсене тупса палăртнă май, хамăр çитĕнÿсене ытлашши пысăка хурса тăшман вăйне тивĕçлипе хисепе хуманни пирĕншĕн мĕне тăнине куртăмăр.

Ленинпа Сталин хамăрăн çитĕнÿсене ытлашши пысăка хума йураманни çинчен, çитĕнÿсем пирки пуççем çавăрăнса кайни пысăк сийен пулни çинчен кăтартса панисене манма йурамаст.

Акă мĕншĕн ĕнтĕ халăх шанса тăнине йаланах тытса пырас тесен, йаланах массăсен тивĕçлĕ руководителĕсем пулас тесен, политикăлă дейателсем мĕнле пулмали çинчен Ленин кăтартса панисем пирĕншĕн саккун вырăнне пулса тăмала.

Пирĕн, Сталин йулташ вĕрентнĕ пек каласан, Ленин сăнарлă дейателсем пулмала. Пирĕн Ленин пекех уçăмлă та пĕр çулпа пыракан дейателсем пулмала. Кĕрешÿре, Ленин пекех нимĕнрен хăраман, халăх тăшманĕсем пирки каçарусăр пулмала, ĕçсем йывăрланма пуçласан, тавракурăмра хăрушлăх курăнма пуçласан, Ленин пекех, туйăнма пултаракан хăравçăлăхран та ирĕк пулмала. Пирĕн пур ыйтусене татса панă чух та, ыйтăва татса панă чухне пур йенчен те виççе пăхмала, хисепе илмеле чухне, пĕтĕм плюссемпе минуссене хисепе илмеле чухне, Ленин пекех аслă пулмала, хыпаланса ÿкмеле мар. Ленин пекех тĕрĕс те тÿрĕ пулмала, хамăр халăха Ленин йуратнă пекех йуратмала. Ленин пек дейателсем пулма, Сталин пек дейателсем пулма вĕренмеле. (Тăваллăн оваци тăваççĕ).

Халăх шанни чи пысăк шанăç пулса тăрат, вăл шанăçа пирĕнтен кашнийех ĕçре туйанса куç шăрçине сыхланă пек сыхлама тивĕç,—акă мĕне ĕнтĕ кашни йертсе пыракан работникĕн ăс-хакăлне кĕртсе вырнаçтармала.

Пирĕн хамăр ретсенчен,—ку тĕлĕшрен пире Совет Конституцийĕ тулли майсем парат,—„турра та çурта мар, усала та турчка мар" тесе йат панă çынсемпе пĕр типла работниксене хуса кăларса пымала. (Кăмăллă пулса ырлаççĕ).

Çавăн пек çынсем халĕ пирĕн сахал мар-ха.

Халăх шаннине хаклама пĕлмеле, кирек ăçта та тата йаланах, кашни утăмрах халăх шухăшне шута илме пĕлмеле, вăл мĕн каланине тимлĕн те сисĕмлĕн итлемеле, хамăр ĕçсене, Ленин вĕрентнĕ пек тата халĕ Сталин вĕрентсе пынă пек, халăх урлă тĕрĕслемеле,—каппаймала мар, пĕр йенчен, пирĕн çĕнтерÿсем питех те пысăк пулнă май ÿсĕмсемпе пуç çавăрăнса кайнине парăнмала мар, тата, тепĕр йенчен, умри тавралăхра кирек йепле те пулин хăрушлăх курăнса тăрат пулсан, хăраса ÿкмеле мар,—çакăн пек задача.

Çак йенчен пăхсан, парти Тĕп комитечĕн йулашки пленумĕ партирен кăларнă чух тата партирен кăларнисен апелляцийĕсене пăхса тухнă чух парти организацисем тунă йанăшсене тÿрлетесси çинчен йышăннă решени пирĕн политикла мĕнле дейателсем пулмаллине кăтартакан питĕ те паха урок пулса тăрат.

Партин Тĕп Комитечĕ вăл решенире—чылай коммуниссен йăвашчунлăхĕпе, шанăçлăхĕпе тата сукăрлăхĕпе усă курса тăшман хăйĕн сăтăрла ĕçĕсене мĕнле чейен туса пыма пултарнине, вăл тĕрĕс ĕçлекен партийецсене мĕнле варалама, вĕсем çинчен елеклеме пултарнине, çапла майпа вĕсене мĕнле те пулин формальнă сăлтавсемпе партирен кăларасси патне илсе пынине кăтартса парат.

Тĕп Комитетăн çав решенийĕ пирĕн ретре чылайах вырăн йышăнса тăракан работниксен тата тепĕр типĕ—партирен кăларнипе ырра тухма пăхакан, тĕрĕс ĕçлекен çынсене тарăхтарса, вĕсене партирен айаккала сирсе тăшман аллине усăлă ĕç тăвакан карьериссен типĕ çине те сталинла аслă лăхпа тата сталинла витĕр куçпа кăтартса парат.

Çакăн пек йăхлă çынсем чылайах çирĕп тип пулса тăраççĕ пулмала, мĕншĕн тесен, Щедринах та çырнă:

— „Хăратăп епĕ çак çамрăк вичкĕн çынсенчен, вĕсем карьерă тăвас тесе ашшĕпе амăшне пăрахма та хатĕр, вĕсем, калас пулат, амăш хырăмĕнчен тухнă тухманах; ак епĕ сана!—тесе курăнман тăшмана хăратнă пек, шĕвĕр пÿрнипе йунаса хăратма тытăнаççĕ". (Залра хавасланă кăмăл тăваççĕ).

Çавăн пек çынсем пирĕн партире те чылайах пур-ха. Çавсем çинчен калат те ĕнтĕ Тĕп Комитет решенийĕ, вăл решени партине питĕ те пысăк сийен тăвакан çавăн пек карьериссене тăрă шыв çине кăларма кăтартса парат.

Тĕпком решенийĕ пирĕн руководителсем ленинла-сталинла сăнарлă дейателсем пулмали çинчен пире кăтартулă урок туса парат.

* * *

Йулташсем! Епĕр сталинла виççĕмĕш пйатилеткăна кĕтĕмĕр. Пирĕн задача—ĕç тухăçлăхне малала çĕклесси тата культурăна малала çĕклесе пырасси пулат.

Хăвăрттăн та пĕр пăркаланмасăр,—ăна тума пирĕн пур майсем те пур,—пирĕн ĕççыннисен материалă тата культурăлă пурнăçне çÿлерех те çÿлерех çĕклесе пымала, вĕсен пуйан та культурăлă пурнăçне малала йамала.

Социалисăм ÿсĕмĕн малашлăхĕ йенчен илсен, пирĕншĕн халĕ именно культурăна çĕклес ыйту мĕн пек питех те пысăк вырăн йышăнса тăни паллă. Пирĕн парти культурăна çĕклес ыйтупа коммунисăм туса çитерес ыйтăва çыхăнтарат. Пирĕн парти тата Сталин йулташ пирĕн малашлăха, епĕр коммунисăм патне малала пырассине стахановла йухăм ыйтăвĕпе çыхăнтараççĕ, стахановла йухăм рабочисене малта пыракан инженерла-техникла работниксен культурăлă çÿлĕшĕ таран çĕклемеле. Çавăнпа та ĕнтĕ Сталин йулташ стахановла йухăма „коммунисăм пĕрчи" тесе йат пачĕ. Вăл пире хăйĕн çимĕçне патăр тесе, пирĕн çак пĕрчĕне савса пăхса ÿстермеле.

Пирĕн хамăр ĕçри хăшпĕр участкăсем йулса пынине пĕтермеле: шыв транспăрчĕ, вăрман хуçалăхĕ т. ыт. те.

Сăтăрçăсене çĕмĕрсе тăкса, епĕр нумай çĕнĕ çынсене пысăк вырăна çĕклерĕмĕр. Епĕр вĕсене вĕрентме тата ленинла, сталинла вĕрентсе ÿстерме, вĕсене ленинла-сталинла сăнарлă дейателсем тума тивĕç.

Пирĕн умра задач: çÿлĕ ĕç тухăçлăхне усăлă йухăма пĕр пăркаланмасăр сарса ÿстерсе пырасси. Стахановла йухăма анлăшĕпе те, тарăнăшĕпе те сарса пымала.

Нумайах та пулмаст, Тĕпком пурне те паллă решени йышăнчĕ, вăл решени çакна кăтартса парат: пирĕншĕн стахановла йухăмри уйрăм рекордсем кăна мар питĕ кирлĕ, пире стахановла йухăмпа ударничествăн пĕтĕмĕшле çĕкленĕвĕ питĕ кирлĕ, стахановла ĕç тухăçлăхĕшĕн кĕрешнĕ май рабочисен мĕн пур массин пĕтĕмĕшле çĕкленĕвĕ питĕ кирлĕ.

Пирĕн умри задач: колхозлă хресченсен культурине тата пуйанлăхне малала ÿстерсе пырасси, йалхуçалăхĕн тухăçлăхне çÿлерех те çÿлерех çĕклесси, Сталин йулташ „çултанлăкра 7—8 мĕлйард пăт тырă туса илмеле" тесе панă лозунга пурнăçа кĕртсе пырасси. Çак лозунга пурнăçа кĕртесси çывăх, мĕншĕн тесен епĕр 1937 çултах колхозсемпе совхозсен хирĕсенчен 7 мĕлйард пата йахăн тырпул пухса илтĕмĕр.

Пĕрчĕлĕ тата техникăлă культурăсен тухăçлăхне ÿстерес, ĕçтухăçлăхне тата рабочи клас колхозлă йала çулсерен нумайрах та нумайрах паракан çав тери лайăх машинăсен питĕ те пысăк хисепĕпе усă курассине ÿстерес задачăна ăнăçлăн пурнăçламала, иккĕленмели те çук—вăл пурнăçа кĕрет.

* *

Йулташсем! Пирĕн çине чи пирвай социалисăмла революцине пуçарма питĕ те пысăк телей ÿкрĕ. Капиталисăм пĕтесси патне пырат, вăл ĕнтĕ хăйĕнчен мĕн те пулин прогрессивлă тата малта пыракан ĕçе тупса кăларма пултараймаст. Хăйĕн ÿсĕмлĕхĕн малашлăхне пăхса курман капиталисăмла общĕствăн пусмăрлакан класĕсем çав тери тарăхаççĕ тата шăртланаççĕ. Буржуази çĕнĕ тĕнчене, социалисăм тĕнчине вилес пекех кураймаст.

Совет Сойузĕн халăхĕсем, хăйсен çулĕ çинчи мĕн пур чăрмавсене çĕнтерсе, çирĕп утăмпа малала утаççĕ, вĕсене Ленин ĕçне малала туса пыракан—пирĕн аслă Сталин—çĕнĕ çĕнтерÿсем тума организацилет, хавхалантарат, йертсе пырат, çавăнпа вĕсем телейлĕ те мăнкăмăллă. (Нумайччен ала çупаççĕ).

ПИРĔН ЗАОЧНИКСЕМ

1937 çулта Вăрнар районĕнчи стена хаçат редакторĕсем чылайĕшĕ „Крестьянская газета" хаçат çумĕнче заочнă вĕренме тытăнчĕç. Иртнĕ çулта пĕтĕмпе 35 стена хаçат редакторĕ вĕренÿве хутшăнчĕ. „Крестьянская газета" йарса панă задачисем тăрăх лайăх вĕренсе пырса, вĕсем нумай пĕлÿ илчĕç. Халь вĕсем хаçата мĕнле майпа кăларса, массăна йавăçтармаллине лайăх пĕлеççĕ.

Çавалкас Мăратри „Комсомолец" колхозра парти кандидачĕ Александров йулташ 1935 çултанпах стена хаçат редакторĕ пулса ĕçлет. Малтанхи вăхăтра ăна стена хаçачĕ кăларма питĕ йавăр пулнă. Стена хаçачĕ массăна хăй йенне çителĕклĕ таран çавăрма пултарайман, стена хаçачĕ çине çырса тăракансем йышĕ сахал пулнă.

— Пирĕн малтанхи вăхăтра стена хаçачĕ кăларас çĕрте план та çукчĕ. Епĕр хаçата хăш вăхăтра кăларас тенĕ, çав вăхăтра кăларнă. Çавăнпа та пирĕн хаçат массăпа çыхăнса тăма пултарайман. Иртнĕ çулта епĕ „Крестьянская газета" çумĕнче заочнă вĕрентĕм. Пур заданисене те вăхăтра пурнăçласа пытăм. Заочнă вĕренни мана питĕ пысăк пулăшу пачĕ. Епĕ Ленин тата Сталин йулташсем пичет çинчен каланă сăмахсемпе лайăх паллашрăм. Стена хаçатне кăларма вĕренсе çитрĕм.

Стена хаçачĕ чăн та колхозра пысăк вăй пулса тăрат. Иртнĕ çулта пирĕн хаçат вăйлă тырпул туса илес çĕрте колхоза калама çук пысăк пулăшу пачĕ. Колхоз кашни гектартан вăтам шутпа 20 центнера йахăн тĕштырă, уйрăм гектарсенчен 30-шар центнер таран туса илчĕ. Кашни ĕçкунĕ пуçне 8,5 килограм тĕштырă тиврĕ. Колхозниксем пуйан та культурăлă пурнăçпа пурăнакан пулчĕç.

Пирĕн хаçат уйăхра 3 номĕр тухат. Ку пирĕншĕн çителĕксĕр. Епĕр малашне кашни уйăхра 5 хут кăларатпăр. Çураки вăхăтĕнче кашни кун тухмала йĕркелетпĕр. Çав тĕлĕшпе епĕ çуракине тухиччен колхозри чи лайăх ĕçлекен стахановецсене пухса, стена хаçачĕсен заданисем çинчен каласа паратăп, — тет Александров йулташ.

Александров заочнă вĕренÿве лайăх паллăпа вĕренсе пĕтерчĕ. Вăл халĕ тăшман кирек йеплĕ маскăпа витĕнсен те шыраса тупса, çапса хуçма пултарат. Акă, Аслă Совета суйлас кампани пынă вăхăтра, тăшманла çынсем Аслă Совета депутатсем суйлас ĕçе чăрмантарас шутпа халăх хушшинче агитаци сарнă. Çамрăк анасене пуш пÿрте илсе кĕрсе, тĕрлĕрен суйа сăмахсем каланă. Çакна Александров вăхăтра сиссе тăрă шыв çине кăларнă.

Александров халăх хушшинче пысăк авторитетлă. Колхозра тăрăшса ĕçлет. Çав вăхăтрах вуламали çурт пуçлăхĕ пулса ĕçлет. Вуламали çурт вăл ĕçлеме пуçличчен начар ĕçлесе пынă. Вăл халăх хушшинче культурă саракан вучах пулса тăрайман. Александров ĕçлеме пуçланăранпа вулав çурчĕ лайăх ĕçлеме пуçларĕ. Унта каннă вăхăтра çамрăксем те, ваттисем те пухăнса тĕрлĕрен хаçат-журналсем, илемлĕ литературă илсе вулаççĕ.

Александров хут пĕлмен вăтă колхозниксене Совет Сойузĕпе йут çĕршывсенче пулса иртекен хыпарсене йаланах вуласа кăтартат.

Вулав çурчĕ çумĕнчех тĕрлĕрен кружоксем ĕçлеççĕ. Драмкружокра 23 çамрăк тăрат. Вĕсем кăçал йалсоветне кĕрекен „Комсомолец" колхоз колхозникĕсене 6 хут, Кăмашри Сталин йачĕпе тăракан колхоз колхозникĕсене 2 хут спектакль лартса кăтартнă. Хор кружокĕнче 15 çамрăк тăрат. Çавăн пекех струнлă оркестр организациленĕ. Унта 10 çын. Вĕсем пĕтĕмпе 21 кĕвĕ калама пĕлеççĕ.

Смирнов Петр — „Апнер" колхозĕнчи стена хаçачĕн редакторĕ. Вăл та лайăх паллăпа вĕренсе пĕтерчĕ.

— Заочнă вĕренни мана нумай пулăшрĕ. Халĕ епĕ стена хаçачĕ кăларас техникăна лайăх вĕренсе çитрĕм, — тет вăл.

Смирнов колхозра хисеплĕ çын. Кирек йепле ĕçре те кулленхи ĕç нормине ытлашшипех тултарса пырат. Аслă Совета суйланă вăхăтра вăл участкăри суйлав комиссии председателĕн заместителĕ пулса ĕçлерĕ.

Кораков Иван—60 çулхи колхозник. Вăл 1937 çулта заочнă лайăх паллăсемпе вĕреннĕ. Колхозри хурт-хăмăр ăстаçи.

— Ĕлĕкхи вăхăтра пирĕн пек начар çынсем вĕренме пултарайман. Вĕренес пулсан укçа нумай тÿлемеле пулнă. Анчах та пирĕн, чухăн çынсен, укçи те пулман. Халĕ пирĕн çамрăксем савăнса вĕренеççĕ. Вĕсенчен вĕреннĕшĕн укçа илмеççĕ. Манăн ватă пулсан та, çамрăксенчен йулас килмест. Иртнĕ çулта епĕ „Крестьянская газета" çумĕнче заочнă вĕрентĕм. Нумай пĕлÿ илтĕм. Анчах та епĕ ку пĕлÿпе лăпланса лармастăп, малала та вĕренсе пыратăп,—тет вăл. Кораков хаçат-журналсене вăхăтра вуласа пырат. Вăл 7 тĕрлĕ хаçат-журнал çырăнса илет.

Краснов Архип „Крестьянская газета" çумĕнче заочнă отличнă паллăпа вĕренсе пычĕ. Халĕ вăл Трак районĕнче тухса тăракан „Колхозник" хаçатăн инструкторĕ пулса ĕçлет.

Кăçал заочнă вĕренме 30 çынна илнĕ. Вĕсем пурте ĕçри стахановецсем. Акă, Крислов Антон Хорнзорти вулав çурчĕн пуçлăхĕ пулса ĕçлет. Тăрăшса ĕçленипе вăл йертсе пыракан вулав çурчĕ районра малта пыракан вулав çурчĕсенчен пĕрийĕ шутланса тăрат.

Никитин Климент—колхоз счетоводĕ. Колхозниксен ĕçкунĕсене вăхăтра çырса пырат. Çавăнпа та ăна колхозниксем йуратаççĕ, лайăх ĕçленĕшĕн мухтаççĕ.

Илларионова Йевгенийа— трахсестра. Трахом чирне пĕтерес тĕлĕшпе ырми-канми ĕçлет.

Иртнĕ çулта районри хаçат редакци заочниксемпе çителĕклĕ таран ĕçлемен. Вĕсемпе вăхăтра конференцисем иртермен. Ку вăл редакторсем улшăнса ĕçлениччен килнĕ. Çавна шута илсе епĕр кăçал заочниксемпе таччăн çыхăнса ĕçлетпĕр. Вĕсене большевикла пичетĕн чăн та çивĕч кадрĕсем тăвассишĕн кĕрешетпĕр.

„Социалисăм çулĕпе" хаçатăн инструкторĕ Н. Козлов.

Клубсемпе вулав çурчĕсен ĕçне лайăхлатмала

Социалисăм строителствинче активлăн хутшăнса ĕçлесе пынă май, ĕçхалăхĕ политикă тĕлĕшĕнчен те, культурă тĕлĕшĕнчен те калама çук пысăк хăвăртлăхпа ÿссе пырат. Ĕçкунĕ пĕтнĕ хыççăн, канмалли вăхăта килте, клубра, хĕрлĕ кĕтесре, вулав çуртĕнче, театрта, кинора иртерет. Çавăнпа та ĕнтĕ вулав çурчĕсен, библиотекăсен йалти политикăла агитацин, большевикла пропагандăн вучахĕсем пулса тăмала. Анчах та чылай чухне вĕсем çителĕклĕ таран ĕçлесе пыраймаççĕ-ха.

Çавалкас Мăратри (Вăрнар р.) „Çуттала" колхоз çумĕнчи вулав çурчĕн пуçлăхе Т. Белов хăйĕн ĕçĕпе интересленсе ĕçлемест. Вулав çурчĕ час-часах питĕрĕнсе тăрат. Массă хушшинче нимĕнле культурăлă массăлă ĕç те çук. Çавна курă та ĕнтĕ колхозниксемпе йединоличниксем вулав çуртне пыми пулнă.

Тăрăнри вулав çурчĕн пуçлăхĕнче (Йелчĕк р.) Лаптев ĕçлеме тытăннăранпа ĕççем пĕтĕмпех йапăхланма пуçларĕç. Вулав çуртĕнче кĕнекесем сахал, хаçат-журнал çителĕклĕ çырăнса илмен. Радио ĕçлемест. Лаптев вулав çуртне 3—4 кунта кăна пыркалат. Нерешри (Çĕрпÿ р-нĕ) вулав çурчĕ темиçе çул хушши ĕçлет пулин те, ĕççыннисене илсе вулама вулав çуртĕнче кĕнекесем çителĕксĕр. Вулав çурчĕн пуçлăхĕ Антонов ĕççыннисем хушшинче нимĕнле культмассăлă ĕç те иртермест. Хаçат-журналсене вулав çуртĕнче тупса вулама хĕн. Вулав çурчĕ çумĕнче нимĕнле кружок та ĕçлемест. Вăрмар районĕнчи Чупайри вулав çурчĕн пуçлăхĕ Н. Павлов вулав çуртĕнчи ĕçе йалтах йапăхтарнă. Кĕнекесене тĕлли-паллисĕр салатса пĕтернĕ. Вулав çурчĕ йачĕпе пырса тăракан хаçат-журналсене Н. Павлов йалти çынсене сутса пурăннă. Вулав çуртне таса тытмаççĕ, стенасем çумĕнчи лозунгсемпе плакатсем тусанланса пĕтнĕ, кантăкĕсем çĕмĕрлчĕк. Вулав çурчĕн ĕçне лайăхлатассипе йалсовет çумĕнчи культсекци те интересленмест.

Палапуç Пашйелри (Турхан р.) клубăн библиотекинче кĕнекесем питех те сахал, пуррисем те ăçта кирлĕ унта сапаланса выртаççĕ. Клуб çумĕнче стена хаçачĕ тухмаст. Клуб пуçлăхĕ Пĕнзин клуб укçипе çыранна хаçат-журналсене сутса, укçине ерех ĕçсе пурăннă. Клубра спектакль, кино пулмаст. Лекци, докладсем тумаççĕ. Клуб çумĕнче нимĕнле кружоксем те ĕçлемеççĕ.

Çак çитменлĕхсене кĕске вăхăтрах пĕтерсе, клубла вулав çурчĕсен ĕçне тивĕçле вырăна лартмала.

„Шурăмпуç“ колхоз мĕншĕн кайра пырать?

Йĕкĕрварти „Шурăмпуç“ колхоз (Çĕрпӳ р.) 1930 çулта организациленнĕ. Сакăр çул хушшинче колхоз председателĕнче 14 çын ĕçлесе пăхнă. Анчах пĕри те йĕркелĕ ĕçлеймен. Пулашкинчен, 1935 çулта, С. Йемелйанова суйласа лартнă. С. Йемелйанов колхоз хуçалăхне пачах йухăнтарса йачĕ. Колхозра дисциплинă çук. Йемелйанов кулакла елементсемпе çыхăнса кайса, колхоза сăтăр тăвакансене хӳтĕлес çул çине тăнă.

Кулак ывăлĕ Степанов Виктор (ашшĕ йединоличник) колхоза мĕнле те пулин сăтăр тăвас тесе çеç пурăнать. Вăл чылай вăхăт хушши ĕлĕк хăйсен пулнă арманĕнче мелник пулса „ĕçлесе“, сахал мар çăнăх вăрласа пурăнчĕ. Вăрланă çăнăхпах пӳрт лартрĕ. Колхоз арманĕнчен Степанов çăнăх вăрлани çинчен правленине темиçе хутчен те систернĕ, анчах правлени нимĕн те туман.

Çавăн пекех кулак ывăлĕ пулнă Тимофейев Митрофан та иртнĕ çулта пĕр ĕçкунĕ те туман. Çав вăхăтрах ĕçсе ӳсĕрĕлсе колхозниксене киревсĕр сăмахсем каласа кӳрентерет, колхоз çинчен елек сарса çӳрет.

Тăваттăмĕш бригадăн бригадирĕ Игнатйев Иван итем çинчен темиçе хутчен те тырă вăрланă. Колхозниксем хăйсен пухăвĕнче ăна суда памала тесе йышăннă. Анчах вăл халĕ те бригадиртах ĕçлет. Йгнатйев Иван лашасăр колхоза кĕнĕ колхозниксем лаша ыйтма пырсан, „есĕр колхоза лашана кĕмен, çавăнпа сире лаша памастпăр“, тесе вĕсене йатланă. Çапла майпа лашасăр колхоза кĕнисем колхоз лашисемпе сахал усă курнă.

Ĕçкĕ ăшне путнă Иванов Алексейа колхоз председателĕ Йемелйанов ответлă вырăнсем парса пынă. Çуллахи вăхăтра Иванов колхозăн тип çеç лартнă садĕнче садовник пулса ĕçленĕ. Унта вăл нимĕн тумасăрах кунне икшер ĕçкунĕ илнĕ. Халĕ вăл çăм таптаракан машинă патĕнче ĕçлет. Унта та Иванов çăм таптарса тупнă укçана ĕçсе пĕтернĕ. Иванов пĕр вăхăтра аслă коњух пулса пурăнчĕ. Тĕрĕслесе пăхнă хыççăн, вăл 2 центнер фуража салатса йани палăрчĕ.

Йемелйанов выњăх-чĕрлĕх ĕçĕнчи сăтăрла ĕçсемпе те йапăх кĕрешсе пырать. Сысна ферминче 12 сысна тата икĕ тыха нумайăх пулмасть вилнĕ. Анчах айăплисене тивĕçлĕ ответ тыттарман-ха.

Мĕн çинчен калаççĕ ку фактсем? Вĕсем колхозăн социалисăмла пурлăхне салатакансем колхозра ăшă йава çавăрни çинчен, вĕсене колхоз председателĕ Йемелйанов сăтăрла ĕçсем тума хӳтĕлесе пурăнни çинчен калаççĕ. С. Йемелйанов чылай ĕçре колхоз уставне пăсать, партипе правителствă решенийĕсене пурнăçа кĕртмесĕр тăрать.

1937 çулхи ĕçкунĕсене халĕ те шутласа пĕтермен. Колхозниксем хăйсем миçе ĕçкунĕ тунине тата тырă мĕн чухлĕ тивессине пĕлмеççĕ. Ĕçкунĕсем тăрăх халĕ те тырă валеçсе паман.

Хањхи вăхăтра колхозсем умĕнче тăракан тĕп ĕç — çуракине хатĕрленесси пулса тăрать. Анчах „Шурăмпуç“ колхоз ку ĕçе тивĕçлипе тытăнман-ха. Пайанхи куна вăрлăх пĕр пĕрчĕ те суртламан, суртлă вăрлăх илсе килмен. Йалхуçалăх машинĕсене йусассипе те ĕç йапăх пырать. Плугсем йур айĕнчех выртаççĕ.

Çак ситменлĕхсене халех тата пĕтĕмĕшпех пĕтерес ĕçре Çĕрпӳ райçĕрĕç пайĕн „Шурăмпуç“ колхоза тивĕçлĕ пулăшу памала.

А. Платонов.

Трийерсем час-часах ĕççĕр лараççĕ

ИШЛЕЙ. Мускăринкассинчи „Социалисăм“ колхоз вăйлă тырпул туса илессишĕн „Хачăк“ колхозпа социалисăмла ăмăртăва тухрĕ. Колхозниксен пĕрлешӳлĕ пухувĕнче кăçал гектартан ыраш 120 пăт, тулă 114 пăт, сĕлĕ 108 пăт, пăрçа-йасмăк 10 центнер, çĕрулми 800 центнер клевер вăрлăхĕ 5 центнер, кантăр вăрри 5 центнер туса илессишĕн кĕрешме хăйсем çине обйазателствăсем илнĕ. Халĕ агротехникăла ĕçсен планне туса хатĕрленĕ.

„Социалисăм“ колхоз çуракине хатĕрленессипе чылай ĕçсем тунă. 120 лав торф турттарнă, фекали 30 лав, кĕл 20 центнер, кайăк-кĕшĕк тислĕкне те чылай пухса хатĕрленĕ. Минерал çăнăхĕсене илсе килнĕ. Çуракине хатĕрленессипе иккĕмĕш бригадă лайăх ĕçлет.

Суртлă вăрлăхсене те улăштарса çитернĕ, анчах вăрлăхсене трийер çук пирки тасатман-ха. Плуг тимĕрĕсене туптаса хатĕрленĕ, тимĕр шăллă сӳресем 10 сӳре тума тытăннă.

Ойкассинчи „Броневик“ колхоз çуракине хатĕрленес ĕçсене вăхăтра туса пымасть. Унта 1222 лав торф, 300 лав тислĕк турттатарнипе лăпланса ларнă. Кĕл, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ, фекали хатĕрлемен. Колхозăн хăйĕн трийер пур, апла пулин те тулă вăрлăхне суртламан. Суртлă вăрлăхсене те улăштарса килмен. Иккĕмĕш бригадăн плугсем йур айĕнчех лараççĕ. Сӳре туртисем, урхалăхсем çителĕклĕ мар.

Йетĕрнекассинчи „Красный пахарь“ колхоз та вăйлă тырпул туса илессишĕн кĕрешмест. Колхоз председателĕ Ф. Романов йулташ калана тăрăх, вĕсем вăйлă тырпул туса илессишĕн „Броневик“ колхозпа ăмăртса ĕçлеççĕ. Анчах ăмăрту договорне туман.

Чылай колхозсенче трийерсемпе тивĕçлипе усă курмаççĕ. Анат-Кĕнер колхозĕнче колхоз председателĕ айăпĕпе пĕр талăк хушши трийер ĕçлемесĕр ларнă. Васликасси йалсоветĕнчи „Красный Октябрь“ колхоза „Броневик“ колхоз йасмăк вăрлăхĕ улăштарма пырсан:—пирĕн вăрлăх суртлă йышши мар,—тесе колхозниксене кайала çавăрса йанă. Агрономсем кăтартнă тăрăх „Красный Октябрь“ колхозăн йасмăк вăрлăхĕ суртлă вăрлăх шутланса тăрать. Вĕсем йурийех вăрлăх улăштарас ĕçе чăрмантарса пыраççĕ.

Гер. Щербаков.

Колхозниксен ĕçлес хастарлăхне çухатма йурамасть

ШĂХАСАН. 1937 çулта вăйлă тырпул туса илни 1938 çулхи тырпулшăн кĕрешессине пĕре те лăплантарма пултарамасть. Сталин йулташ 7—8 мĕлйард пăт тырă туса илмели çинчен лартнă задачăна пĕтĕмпех пурнăçа кĕртсе çитерме пирĕн тырпул тухăçне хăпартас ĕçре татах та сахал мар çитĕнӳсем тумала. Бољшевикла кĕрешӳ çеç вăйлă тырпул туса илме май парать. Сакна Шĕкĕр (Шăхасан р-нĕ) йалсоветĕнче ĕçлекенсемпе колхоз правленийĕсем пачах лăпланса илесшĕн мар. Вĕсем 1938 çулхи çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе йапăх ĕçлесе пыраççĕ.

„Красный пахарь“ колхозра пайанхи куна та вăрлăхсене суртласа пĕтермен. Вăрлăха 3—4-мĕш бригадăсем (Федоров, Семенов) пĕр пĕрчĕ те суртламан. Пăрçана 16 центнер те 80 килограм алла суртласа акмала пулсан, çав вăрлăха колхозниксен килĕсене салатнисĕр пуçне урăх нимĕн те туман. Вăрлăхсемпе лаша апачĕсене хума амбарсем çителĕксĕр. Çапах ку таринччен те тупăшсене валеçсе пĕтермен.

Çĕре çемçетмели йапаласене хатĕрлес ĕç те йапăх пулса пырать. Унта тислĕк 9000 лав кăлармала пулсан, 3000 лав анчах кăларнă. Фекали 55 лав вырăнне 40 лав хатĕрленĕ. Йушкăн 3000 лав турттармала пулсан, пĕр лав та кăларман. Суперфосфатпа силвинит та çителĕксĕр, 140 лав кĕл пухас вырăнне 50 лав анчах пухнă.

Йалхуçалăх машинисем кĕркунне ĕç пĕтерсен мĕнле лартнă—çаплипех лараççĕ.

Лашасем колхозра пысăк вăй пулса тăраççĕ. Анчах ку колхозра лашасене мĕнле пăхаççĕ-ха? Кунта 76 лаша шутланать пулсан, вĕсенчен ĕçе йурăхлисем 45 çеç, ыттисене пĕтĕмпех пăсса пĕтернĕ, 10 лаша чирлĕ. Лашасене коњухсем йапăх пăхаççĕ. М. Иванов коњух пĕр кĕсрене вăрмана кайса ĕçе йурăхсăра кăларнă. Колхоз правленийĕ ку тарана çитсе те ăна уншăн ответ тыттарман. Колхозниксем лашасене никамран ыйтмасăрах илсе кайнисем те пулнă.

Колхозра хăмăт, йĕнерчĕк тата ытти хатĕрсем çителĕксĕр.

Бригадирсем колхоз председателĕ хушнă ĕçсене тумаççĕ. Çуракине хатĕрленесси çинчен пухусенче тухса калакансене Йаковлев бригадир хĕссе пырать.

Кунта йединоличниксем те çуракине хатĕрленессипе нимĕн те туман, йалсоветре вĕсем çинчен пачах манса кайнă.

Колхозниксен ĕçлес хастарлăх пысăк, анчах вĕсене йертсе пыма пĕлни кирлĕ, вĕсен хастарлăхне çухатма йурамасть.

Дм. Иванов.

Шанчăксăр председател

ÇĔРПӲ (хамăр корр.). „Сталинец“ колхоз председателне иртнĕ çулта М. Хрисанов йулташа суйласа лартрĕç. Ăна колхозниксем колхоза йалхуçалăх ертел уставĕ тăрăх йертсе пырса, чăннипех бољшевикла колхоз тăвассишĕн кĕрешме хушса хăварчĕç. Анчах председателĕн ĕçĕ тивĕçлĕ вырăн йышăнаймарĕ.


Иртнĕ çуркунне колхоз 1,5 гектар çине вăрлăхлăх чĕкĕнтĕр лартса хăварчĕ. Вăрри пулма пуçласанах ун çине вырăхсем йартарса пĕтĕмпех ваттарса пĕтернĕ. Çакнашкалах 100 тăваткăл метр лаптăк çине вăрлăхлăх лартнă, сухана çитерсе йанă, тепĕр вырăнта сухана кăлармасăр йур айне хăварнă.

18 гектар çине çĕртме тумасăрах ыраш актарса хăварнă. Çавна пула кăçал çав участкă çинче гектартан 12 центнер çеç тухнă.

Ĕç хатĕрĕсем, çуна, урапа, лаша таврашĕсем çитмеççĕ. Лашапа кирек ăçта каймала пулсан, лашă тавраш ĕсене шырасах кун каçаççĕ.

Кунпа пĕрлех çакна каласа хăвармала: колхоз председателĕ Хрисанов чукунçул строителствинче ĕçлекен çул мастăрĕ Матвейевна килĕнче 17 хăма хăйне валњи илет. Çав хăмасемшĕн чукунçул строителстви управленийĕ колхозниксем ĕçленĕ укçаран 195 тенкĕ тытса йулать. Колхозниксем пайанхи куна çитсе те 195 тенкĕ укçана илеймеççĕ.

П. Архипов.



ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Вăрнар МТСтанцинчи тракторсем йусакан 2-мĕш бригадăри Г. П. Павлов ремонтор коленчатăй валăн подшипникне йусать.

Цыганов фото-ӳкерчĕкĕ.

Канаш-Шупашкар хушшинчи чукун çул строителстви

ЛАЙĂХ ОПЫТСЕНЕ САРАТПĂР

Нумай пулмасть епĕр ССР Сойуз Аслă Совечĕн пĕрремĕш Çессине Чăваш республикинчен кайнă депутатсем йанă телеграммăна сӳтсе йаврăмăр. Кун хыççăн бригадă членĕсем кашнийех тивĕçлĕ обйазателствăсем илчĕç.

Пирĕн бригадăра пурте стахановла ĕçлеççĕ. Епĕр кашни 45 минут хушшинче 325 метр тăршĕ рељсă саратпăр. Хăвăртлăхсене ӳстерсех пырассишĕн ăмăртса ĕçлетпĕр. Епĕр Мăн Çавал шывĕ урлă кĕпер хывассине хамăрах пурнăçа кĕртме пулатпăр.

Пирĕн бригадăра уйрăмăнах Максимов, Кудрйашов, Йевдокимов, Йемелйанов йулташсем пысăк тухăçлăхпа ĕçлеççĕ. Вĕсен опычĕсене сарса пырса чукунçула хăвăртăн туса пĕтерессишĕн пĕтĕм вăйа, пултарулăха хурса ĕçлеме пулатпăр.

8-мĕш участкăри бригадир **С. Тарасов.**

Бригадă членĕсем: **Максимов, Кудрйашов.**

Вагонсем параççĕ, тийекенсем çук

Пайан та, ĕнерхи пекех, вăрман складĕнчи йăвăç материалĕсене тийеме вагонсем нумай панă. Вагонсене тийемели вырăна лартнăранпа пĕр сехет иртрĕ, тийесе çитермели срук та çывхарса килет. Анчах тийекенсем çук. Пыракансем те курăнмаççĕ.

Кунашкал фактсем вăрман варринче ларакан Пинер расйесĕнче йулашки кунсенче час-часах пулса пыраççĕ. Вагонсем параççĕ, тийекенсем çук. Çав вăхăтрах чукунçул работникĕсем саккунсене çирĕппĕн пурнăça кĕртеççĕ. Вăхăтра тийеменшĕн, простой тунишĕн вăрман складĕнчен çийĕнчех штраф илеççĕ. 1937 çулта вăрман складĕ простойсемшĕн 1298 тенкĕ тӳленĕ. Ку çеç мар-ха. Тийенĕ материалсене вырăнсене йамали документсене тĕрĕс туманшăн 7.640 тенкĕ, вăхăтра укçа тӳлеменнишĕн 2.300 тенкĕ штраф тӳленĕ.

Мĕншĕн капла пулать, камсем айăплă? Вăрман складĕнче ĕçлекенсем хушшинче: „вăрманти ĕç—тĕксĕм ĕç“ тенĕ халап хытă саралнă. Ку сăмахсем, рабочисем калашле, склад начањникĕ Луњков, счетовод Лебедев йалинче вирлĕнех çирĕпленнĕ. Вĕсен иртнĕ вăхăтри „ĕçĕсем“ те çавăн çинчен калаççĕ. 1937 çул варринче складра вагонсем çине материалсем тийенĕ çĕрте бригадăсем ĕçленĕ. Ĕç ăнăçлăн пынă. Бригадă членĕсем ӳркенмен. Ир, ие каç вагонсем парсанах ĕçлеме тухнă. Простойсем те сахал пулнă.

1937 çул вĕçĕнче бригадăсем пĕрин хыççăн тепри „Бољшевик“ завод валњи вагонсем тийенĕ çере кучнă.

—Пире кунта кашни кубла метра тийеме 60 пус параççĕ. Хакĕ пĕр пекех. Анчах кунта Лебедевпа Луњков пек кутăн çынсем мар, йĕркелĕ çынсем,—теççĕ рабочисем.

Луњковпа Лебедев хăйсем склад руководствинче тăнипе тата вăрманпромхоз руководителĕсен йăвашчунлăхĕпе усă курса, государствă пурлăхне хăйсем çумне чикеççĕ, рабочисене улталаççĕ. Ĕçленĕшĕн квитанцисем çырнă чухне ĕçлекенсен адрĕсне, миçе кун, мĕн чухлĕ ĕçленине тĕплĕн кăтартман. Складри чĕрĕ тавар сенчен материалсем тума виçесерех парса пынă. Хаклă отходсене, вăрманпромхозран пыракан нарйадсене шута илмен. Йусав ĕçĕсене йышăнса пыман. Ĕçе кунпек пăтраштарни Луњковпа Леоедева хăйсен ултавлă ĕçĕсене витсе пыма кирлĕ пулнă.

Луњковпа Лебедев хăйсене кирлĕ материалсене складран илсе тăнă. Хăйсен ĕçĕсене склад шучĕпе ĕçлеттерни те пулнă. Ахаљтен мар ĕнтĕ склад тĕрлĕ суртла йавăçсем хатĕрлессипе 1901 тенкĕ, материалсене тийессипе 4467 тенкĕ тата ытти тĕрлĕ ĕçсем йенĕпе 3000 тенке йахăн убыткă панă. Ку хисеп укçа-тенкĕне вăрманпромхоз директорĕ Сазанов склада ревизи тунă отчота çирĕплетнĕ май çырнă приказра: „ĕçсемшĕн саккунсăр ӳстерсе тӳленĕ“ укçа-тенкĕ хисепне кӳртет. Çапла-ши вăл?

Сазанов хăйĕн приказĕпе склад 20 пин тенкĕ ытла убыткă панине палăртса Лебедева хытăн йатласа асăрхаттарнă. Пире çакă тĕлĕнтерет: Сазонов вăрманпромхоз убыткă тӳснине Лебедева хытă йатланипе тата Луњков пирки „хытă мерăсем“ йышаннипе шайлаштарать иккен. Ку ĕнтĕ Сазанов йăвашчунлăх тыткăнне кĕрсе ӳкни, ĕçе чăрмантаракансемпе кĕрешме хăйулăх çитерейменни, рабочисене ĕçлеме условисем туса парассишĕн тăрăшманни çинчен калать. Çавна пула ĕнтĕ, хањхи вăхăтра складра пурĕ те 3—4 çын çеç ĕçлеççĕ.

Склад ĕçне лайăхлатма чи малтанах руководствă ĕçне çĕнетсе йĕркелени кирлĕ. Ун пек тума работниксем хушшинче дисциплинăна çӳлĕ вырăна лартмала. Кашни работник хăй вырăнĕнче ĕçлетĕр. Варманпромхоз руководствин Пинер складĕнчи ĕçсем çине халех тĕплĕн çавăрăнса пăхмала.

М. Т.

Бригадă аван ĕçлет

Канашпа Шупашкар хушшинчи чукун çул строителствинче болтсене винтăласа пыракан Тимофейев бригади йулашки вăхăтра лайăх тĕслĕхсем кăтартса ĕçлеме пуçларĕ. Йанварĕн 26-мĕшĕнче бригадă рељсă саракансенчен пĕре йулмасăр 4-шар болт винтăласа пычĕ. Кондратйев, Тимофейев тата Анохин йулташсем хăйсен планĕсене 125 процент ытла тултарса ĕçлеççĕ.

С. Тарасов.

Музыкă инструменчĕсем тăвакан ертел

ЙĔПРЕÇ. Чăвашкуљпромсойуз системинче ĕçлекен „Красный столяр“ ертел çĕнĕ производствă—музыкă инструменчĕсемпе паркет валњи кљопкă тата сĕтел-пукан тăвас ĕçе пуçласа йачĕ.

Малтанхи вăхăтрах музыкă инструменчĕсем тăвассипе 4 çын ĕçленĕ, халĕ 30 çын ĕçлет. Вĕсем туса кăларакан гитарă, балалайкă, мандолина тата сĕрме купăс пахалăх йенчен ытти фабрик-заводсем туса кăларакан инструментсенчен пĕре те кайа йулмаççĕ. Çаксене сутса ертел иртнĕ 1937 çулта 23 пин тенкĕ тупăш илчĕ. Музыкă хатĕрĕсем тăвакан мастерсем Никифоров, Никитин, Прокопйев ĕçре çав тери паха тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Гитарă тăвакан Охотников йаланах хăйĕн нормине 150 процент тултарса пырать.

1938 çулта план тăрăх ертелĕн 100 пин тенкĕлĕх музыкă инструменчĕсем туса кăлармала.

Марушев.

БИБЛИОГРАФИ

Кăвакпа шурра уйăрайман писатĕл

Епĕр, 1917—18 çулта çуралнă допризывниксем, Чалдунăн „Икĕ вăй“ йатлă произведенине вуласа тухрăмăр. Мĕнле хакламала ку произведенине? Тӳрех калас пулать, мухтамалли вырăнсем нумайах мар унта.

Чалдун нумай çырать. Нумай кĕнекесем пичетленсе тухнă унăн. Пирĕн унăн „Икĕ вăйĕ“ çинче кăштах чарăнса тăрас килет.

Тинĕ тата вырăнсăр сăмахсем „Икĕ вăй“ илемне нумай чакараççĕ. Чалдун хăйĕн произведенийĕсенче нихăçан та художествăлă пĕтĕçтерӳ, витĕмлĕ образсем тумасть. Чалдунăн вăхăчĕсем чĕкеç пек вĕçсе иртеççĕ: „кун хыççăн кун, ерне хыççăн ерне, уйăх хыççăн уйăх иртет“. Вăхăт иртнĕ çемĕн пулса пыракан улшăнусене Чалдун питĕ çийелтен тата типĕ сăмахсемпе çеç çырса парать.

Произведенири геройњăна—Йаланпийе Алапайăн пуйан ывăлне—Семене, „ăса ларса çитеймен-скерне“, качча тытса параççĕ.

„Семен кĕске ăслă, илемсĕр, сĕлеке туталă“—çапла сăнлать ăна автăр. „Çитменнине ăса ларса çитеймен Семен Йаланпи хуйхине пусарма та пĕлмест“.

Семен ашшĕ—Алапай Йаланпийе хапсăнать. Вăл тăван ывăлĕ вăрçăра пĕтнĕшĕн „усаллăн савăнать“.

Автăр тĕрлĕрен ăпăр-тапăрсене кăларса тăратса вулакан куçĕсене йӳçĕхтерет. Мĕне кирлĕ пулнă-ха Симбиркă йалĕнчи „виçĕ салтак арăмĕ утмăл çулхи старике чут пусмăрласа вĕлерменни“ çинчен суйса асăнма? „Çинахвун кинне пусмăрласа йĕкĕр ача çуратни“ çинчен асăнма? Кусем нийепле çĕнĕлĕхсем те кӳмеççĕ литературăна.

Чалдун: „—Микулай патша пĕтĕмпех ухмахланнă. Патшалăх ĕçне патша арăмĕпе ĕлĕк лаша вăрри пулнă Гришкă Распутин туса пыраççĕ“, тесе çырнă хыççăн, малала вулаканшĕн йурăхсăр пулса тăракан, йĕрĕнтерекен сăмахсене кӳртсе тултарать. Çавăн пек кирлĕ мар сăмахсемпе лăпăртатиччен урăх çырмалли сем çук-ши вара Чалдун валњи?

Чалдунăн нимĕ йурăхсăр, илемсĕр, тăрлавсăр, вырăнсăр сăмахсем страницистраниципех тĕл пулаççĕ.

Чалдун пур ăпăр-тапăрсене те произведенине кӳртсе хăварнине каларăмăр епĕр. Анчах, мĕнле-ха, Чалдун умĕнче кун хыççăн кун йĕркеленсе иртсе пынă чух Аслă Социалисăмла революци çулăмлă кунĕсем сиксе йулаççĕ? Ăпăр-тапăрсене валњи вырăн пур Чалдун произведенинче, историлĕ куна валњи çук, революци хĕрӳлĕ кунĕсем сиксе йулаççĕ. Тĕлĕнмеле...

Йаланпи хăй упăшкипе (Карлапа—иккĕмĕш упăшкипе) çума-çумăн тăрса фронтра çапăçать.

„Йуратаççĕ хĕрлĕгвардейецсем Йаланийе! Йуратмасăр, вăл вĕт вĕсем хушшинче пĕртен пĕр хĕрарăм!“—

Тĕлĕнмеле, хĕрарăм пулнăшăн çеç йуратаççĕ-ши вара хĕрлĕгвардейецсем Йаланпийе? Унăн тава тивĕçлĕ ĕçĕсем мар-ши? Чалдуна çаксем хыççăн литературăри аскăн çын тесен пĕрре те йаланпи пулас çук. Пурнăçăн пур йенне те тӳнтерле туса кăтартать. Чалдун пурнăçа пĕлмест, пĕтĕмпех хăйĕн пуçĕнчен ĕмсе кăларса çырать. Мĕншĕн пичетлесе кăлараççĕ-ши çавăн пек ăпăр-тапăр произведенисене. Партизансем çинчен çырнă тесе пичетленĕ пулас. Анчах патăр партизансенчен мăшкăласа çырнипе курман редакторсем.

Тĕрĕсмарлăхсем, ĕненмеле мар, тата ниме йурăхсăр сăмахсем—кĕнеке туллийех. Çак тĕслĕхсем кăна мĕне тăрас! Итлĕр:

„...ăйăрĕ хăлхисене лапчăтса, малти урисемпе авăнса, кăвапа сăмсинчен кап! сыртрĕ те, сăмси вĕçне тăрт! татса илчĕ.“ Питех те йăвăр ку пуплеве ĕненме. Пирĕнтен ĕненсе пулмастех.

„Ы-ы-ы“—тесе кулать-ши кам та пулин? илтнĕ-ши Чалдун, хăй, çавăн пек кулнине?

„—Иванов тăварсăр йашка сыпнă пек, шăл пулчĕ“. „Кăвак măйăхĕ ик йенеле ухват пек усăнса тăракан сын.“

„Йур пек шурă-кăвак лаша.“ Мĕнле ăнланмала-ха? Йур шурă-кăвак пулать-ши вара?

Ыттисене питех асăнса тăмăпăр. Халĕ илсе кăтартнă тĕслĕхсем те Чалдунăн йĕркесĕрлĕхĕсем çинчен лайăх каласа параççĕ. Вулакансем илемлĕх йенчен те, содержани йенчен те аван произведенисене кĕтеççĕ. Ăна Чăваш Совет писателĕсен памалах.

И. Йефремов. В. Сидйаков.

Кашни колхозник пӳртĕнче електричествă çути пулать

Тĕрлемес (Куславкка р.) йалсовечĕ кашни колхозник пӳртне електричествă çути кĕртме тăрăшать. Хаљ пралук йуписене лартса пралук карма тытăннă. Çитес уйăхсенчех колхозниксен пӳртĕнче електричествă çути пулать.

С. И.

ПСК(б)П ТĔПКОМĔН ЙАНВАРТИ ПЛЕНУМĔ ЙЫШĂННĂ ПОСТАНОВЛЕНИНЕ БРОШӲРАПА КĂЛАРАÇÇĔ

ПСК(б)П Тĕпкомĕн йанварти Пленумĕ „Парти организацисен коммуниссене партирен кăларнă чухнехи йăнăшĕсем çинчен, партирен кăларнисен апељљацийĕсем çине формаљнă-бӳрократла пăхни çинчен тата çав çитменлĕхсене пĕтермели майсем çинчен“ йышăннă постановленине Чăвашпартиздат чăвашла чĕлхепе пичетлесе кăларать. Брошӳрă 10 пин екземпљарпа тухать.

Брошӳрăна çак кунсенчех пичетлесе пĕтерсе сутма пуçлаççĕ.

„Ленин в Октябре“ картинăна пысăк ĕçкленӳпе кураççĕ

Йанварĕн 16-мĕшĕнчен пуçласа Улатăрта „Арс“ кинотеатрта питех те чаплă „Ленин в Октябре“ кинокартинă кăтартаççĕ. Кĕске вăхăтрах ку картинăна темиçе пин çын кайса курчĕç. Организацисем, учрежденисем, шкулсем кино курма ушкăнпа кайаççĕ.

Йанварĕн 22-мĕшĕнче Транспăрт вĕренӳ комбинатĕнчи студентсемпе преподавателсем ушкăнпа кайса курчĕç.

Кино куракансем картина пысăк хак параççĕ. Шчукин артист Ленин ролне аван выљанине палăртаççĕ.

А. Иванов.

Шкулти оркестр

Балдаври (Йетĕрне р.) вăтам шкулта Чугунов преподавател пуçарнипе 13 çынтан хĕлĕхлĕ оркестр оргланизациленĕ. Вĕренӳ çулĕ пуçланнăранпа Йетĕрне хулине кайса икĕ хутчен выљаса панă. Кунсăр пуçне çывăхри колхозсенче те чылай выљаса панă.

Н. Тимофейев.

Ответлă редактор заместителĕ И. П. ПАВЛОВ—ПИНЕР.

Чăваш АССР Коммуналă банкне йалан ĕçлеме
Инспектор-плановик
тата
Кредит ĕçĕпе инспектор
КИРЛĔ
Госбанк çурчĕ, Коммуналă банк.

Шупашкарти кино-студи
хăйĕн сотрудникĕсене валњи хватерлĕх
ПӲЛĔМСЕМ ШЫРАТЬ.
Хак килĕшӳ тăрăх.
Кино-студине: ЕЛЕКТРОМОНТОР, лаборант пулма тата електро-çутăпа çутатма вĕренме çамрăксем
КИРЛĔ.
Адрес: Шупашкар, Карл-Маркс урамĕ, 30.

Каранйалĕнчи „Труд“ промысла ертелĕ (Сĕнтĕрвăрри районĕ)
арман урапisem (шыв урапи, тип урапа, çиларман урапи) çĕнĕрен тума тата йусама
ЗАКАЗСЕМ ЙЫШĂНАТЬ
Адрес: Каранйаљ, Сĕнтĕрвăрри р., ЧАССР. „Труд“ промысла ертелĕн ПРАВЛЕНИЙĔ.

Академи театрĕнче
Йанварĕн 30-мĕшĕнче
Вырăсла спектаклљ
А. Н. Островский
„На всякого мудреца довольно простоты“
(3 пайлă 6 картинăлă комеди)
Аслă режиссор Г. В. Сперанский лартать.
Художник Й. Н. Сапожников.
Талон № 97. Абонемент № 10, талон № 2.
Анонс! Шекспир
ОТЕЛЛО
Лартма хатĕрленеççĕ.

„ЧĂВАШКИНО“ ТРЕСТНЕ
Економист-плановик
тата
Бухгалтер-ревизор
кирлĕ
Зањати вăхăтĕнче „Чăвашкино“ тресчĕн аслă бухгалтерĕ патне пымала. Саслă кино-театр çурчĕ.
2—1

„Чăваш коммунĕ“ çырăнса илмели хаксем: 12 уйăха—30 т., 6 уйăха—15 т., 3 уйăха—7 т. 50 пус, 1 уйăха—2 т. 50 пус. Алçырăвĕсене кайала памаççĕ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 54. Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашполиграфтреста. Заказ № 2. Тираж 14,500 53—52 н. л. Т—Т.